Чебоксары … библиотека (stamp, partly illegible)

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЛĔ 17 ВЫРСАРНИКУН 163 (4976) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать — *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* — Пер №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн ?—46; Дежурнăйĕн ?—23

Çĕнĕ вĕренӳ çулне большевикла хатĕрленсе кĕтсе илер

Тепĕр уйăх çурăран пирĕн аслă çĕршыври темиçе пин шкул алăкĕсем çĕнĕрен уçăлаççĕ. Мĕлйун совет ачисем çулахи хĕвел питĕнче лайăх канса вăй пухнă хыççăн, шкула кĕреççĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пирĕн ума тата пысăкрах, тата ответлăрах задачăсем лартать. 1937—38 вĕренӳ çулĕнче пирĕн шкулсем чи паха ĕç—пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçарнă. Анчах вăхăтра пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм халăх Сталин йулташ малта пыракан аслăлăх çинчен, Молатăв йулташ аслă шкулсен задачисем çинчен каланă сăмахĕсене илтме телейлĕ пулчĕ. Вăл сăмахсем пирĕн парти руководителĕсемпе правителстви малта пыракан революцилĕ аслăлăх çине мĕнле пысăк тимлĕхпе пăхнине кăтартса параççĕ.

Совет ĕççыннисем иртнĕ суйлавсенче коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн чĕре тулли хаваслăхпа сасăласа, социалисăмлă тăван çĕршыв тĕрекне тата ытларах çирĕплетессишĕн, унăн пуйанлăхĕсене, культурине, унăн шкулĕсене тата ытларах ӳстерессишĕн сасăларĕç.

Пирĕн халĕ „малашлăх аслăлăхри çамраксенĕн пуласси̇не" пурте лайăх ăнланса илнĕ. Ахальтен мар совет халăхĕ хăйĕн тăван шкулĕнчен çулран-çул ытларах çитĕнӳсем ыйтать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ социалисăмлă культурăн, совет шкулĕн ӳсĕм çулĕ çинче тепĕр хăйулă та çӳлĕ пусăм пулса тăмала. Вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленни çак пусăмăн ăнăçлăхне татса парать. Сентябрĕн 1-мĕшĕччен йулнă шутлă та хаклă кунсенче çутĕç оргăнĕсем чăн-чăн хĕрӳ ĕççинчи пек ĕçлемеле, вĕсен хăйсен пултарулăхне халь кăтартмала.

Анчах мĕнле пырать-ха республикăра çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕç? Мĕнле ĕçлеççĕ çутĕç оргăнĕсем? Тӳрех каламала, начар. Чылай çĕрте çынсем „çулахи настроени" текен сӳрĕклĕхе парăннă.

Чи малтанах пирĕн хаваслă ачасене кĕтсе илме шкул çурчĕсем хатĕр пулмала. Республикăра кăçал çĕнĕрен 33 шкул çурчĕ туса пĕтермеле. Анчах шкул строителстви халĕ тӳсме çук кая йулса пырать. Пайанхи куна планри 33 шкулран 2 шкул çуртне çеç туса пĕтернĕ, чылай çĕрте ĕç никĕс хывнинчен малала кайман, Куваккинă районĕнчи Миренки, Йĕпреç районĕнчи Буинск, Турхан районĕнчи Шăхаль шкулĕсен çурчĕсене тума пачах та тытăнман-ха. Тӳррипе каласан, халĕ шкул строителствине, районри стройтехниксемсĕр пуçне, никам та йертсе пымасть. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ строителствă пирки постановленисем йышăннă, сроксем кăтартса панă, анчах Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе райĕçтăвкомсем вăл постановленисене вăхăтра пурнăçа кĕртмеççĕ. Пирĕн шкулсене вăхăтра тума пурте пур, стройматериалсем, укçа-тенкĕ çителĕклĕ, халăх ĕçлесшĕн. Çĕнĕ шкул çурчĕсене вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле ĕлкĕртмеле, йусамалисене пурне те тĕплĕн чăн чăн хуçа аллипе йусамала.

Государствă планĕ тăрăх кăçал пирĕн республикăри шкулсене пĕрремĕш класа çĕнĕрен 32.400 ача илмелĕ. Анчах районсенче халĕ ачасене вĕренме илес ĕçе организацилес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çутĕç оргăнĕсем кунта иртнĕ çулсенчи йăнăшсене шута илмеççĕ, вĕсене çак ĕçре тимсĕрлĕх уйрăмах хытă пусать. Çутĕç оргăнĕсенче ларнă халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандитсем, шкул ĕçне аркатса пынипе пĕрлех, совет ачисене шкул тулашĕнче мĕнле те пулин ытларах хăварас тесе хыпăннă. Ахальтен мар пирĕн республикăра шкул çулĕнчи ачасем çулсерен 4—5 шер пин шкул тулашĕнче йулса пынă. Çакăн çинчен татах манна пулас çутĕç оргăнĕсем. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ шкул çулне çитнĕ ачасене шута илмен, вăл ку тĕлĕшпе госплан цифрĕсене çеç пĕлет. Йалсовечĕсем кăçал шкула çĕнĕрен илмели ачасене çырса тухман.

Пирĕн тăван çĕршывра хут вĕренмесĕр йулакан пĕр ача та пулмала мар. Çутĕç оргăнĕсен, вырăнти совет оргăнĕсен ачасене шкула илес ĕçе, политикăлă пысăк ĕç вырăнне хурса, лайăх йĕркелемеле, кашни ача хăйне тимлĕн пăхнине туйтăр, шкула кĕрсе хаваслансах вĕрентĕр.

Шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхĕ чи малтан, паллах, учителрен килет. Совет учителĕсем большевисăмпа çирĕп хĕçпăшалланнă, анлă та тарăн пĕлӳлĕ, пысăк ăсталăхлă чăн-чăн большевикла педагогсем пулмала. Вĕрентекенĕн хăйĕн те куллен вĕренсе пымала. Вĕренӳ çулне вĕçлă нĕ хыççăн, нумайĕш учителсем курссене, заочниксен çеççисене килчĕç. Анчах татах калама лекет: Çутĕç Халăх Комиссариачĕ ку ĕçе те тивĕçлипе йĕркелеймерĕ. Пуçламĕш шкулти учителсен курсĕсене 1.100 çын, туллимар вăтам шкулсем йĕнĕпе—130 çын пухăнмала пулнă пулсан, кунта çурри те пухăнман. Ытти курссене те начар организациленĕ. Заочниксен çеççине 1328 çын килес вырăнне 698 çын çеç килнĕ.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕн педагогсен кадрĕсене шкулсем тăрăх халех вырнаçтарса çитермеле. Учител пĕр-пĕр шкула çирĕп вырнаçсан, хăйне çав шкулшăн ответлă туйать, вĕренӳ çулне лайăхрах хатĕрленме тăрăшать. Çапах та Çутĕç Халăх Комиссариачĕ учителсене вырăнтан вырăна куçарас йăлана пăрахман. Педагогсен кадрĕсене шкулсем тăрăх уйăрса çирĕплетес ĕçре пăтраштарусем нумай. Кăçал педагогикă институчĕпе учителсен институчĕ вĕренсе пĕтернисене, районсем ыйтнине шута илсе мар, мĕнле май килчĕ çапла вырнаçтарса тухнă. Ку тĕлĕшпе уйрăм районсене, сăмахран, Шăнкăртам, Шăхасан тата Йелчĕк районесене Çутĕç Халăх Комиссариачĕ хытах кӳрентернĕ. Шăнкăртам районне кăçал аслă шкул пĕтернисенчен 2 çын çеç панă, кунта вĕсене 7 çын ыйтнă.

Кадрсене вырнаçтарас пирки тата нумай калама пулать, анчах шкулсенче йĕркелĕн ĕç пуçлама республикăпе 170 учител çитменни уйрăмах пысăк йăвăрлăх пулса тăрать. Çутĕç Халăх Комиссариачĕн учителсен йышне тĕплĕн тата хăвăрт пăхса тухмала, ытăва, иртнĕ çулсенчи пек учител çитмесен квалификацисĕр çын лартнипе мар, лайăх шухăшласа татмала.

Çутĕç оргăнĕсенче ларнă халăх тăшманĕсем шкул программисемпе учебниксем тăвас ĕçре нумай сăтăрланă. Тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтермеле, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле учителсене — тĕплĕн шухăшласа тунă çирĕп программăсем, шкул ачисене лайăх учебниксем памала. Ку тĕлĕшпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕн тата Чăвашгизăн халăх умĕнчи парăмĕсем питех те пысăк. Кăçалхи çул каларма палăртнă 46 тĕрлĕ учебникрен пайанхи куна пĕтĕмпе те 3 тĕрлĕ учебник çеç кăларнă. Кунта ответлăха Çутĕç Халăх Комиссариачĕ Чăвашгиз çине, Чăвашгиз типографи çине тӳнтерессе вĕçĕмсĕр тăсăлса пырать. Ку йĕркене пĕтермеле, кашни организаци государствă умĕнче хăйĕн ĕçĕпе ответлă пулмала.

Учителсем, уйрăмах йалти шкулсенче ĕçлекенсем, методикă йенчен куллен пулăшса пыма ыйтаççĕ. Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе унăн вырăнти оргăнĕсем учителсемшĕн пуринчен ытларах административла центрсем пулса тăраççĕ-ха, хытăрах каласан, вĕсем халĕ, ушкăнĕпе илсен „статистикă департаменчĕ" пек курăнаççĕ. Шкул пурнăçĕ çинчен сводкă тăрăх ытларах пĕлеççĕ. Чĕрĕ учител, конкретлă шкул вĕсен тимлĕхне кĕрсе çитеймен-ха. Районти инспектăр методист хисепре мар. Час часах районти шкул инспекторĕсен вырăнĕнче шкулта ĕç тупайман çынсем ĕçлеççĕ. Кунашкал йĕрке большевиксене тивĕçлĕ мар. Ответлă ĕçре ответлă çынсем кăна ĕçлемеле.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ çитесси нумай йулмарĕ. Пирĕн умра тăракан ĕç пысăк та ответлă. Ĕçе пĕтĕм вăйпа, чăн-чăн большевикла тимлĕхпе тытăнсан, шкул пурнăçĕнче мĕн тумаллине пурне те туса ĕлкĕртме пулать.

Совет халăхĕ совет шкулне йуратать, вăл ăна сталинла тимлĕхпе пăхать. Совет халăхĕ çутĕç оргăнĕсене çамрăк ăрăва вĕрентсе, коммунисла пăхса çитĕнтерес ĕçе шанса панă пулсан, вăл çутĕç оргăнĕсенчен совет шкулне пĕтĕм совет çĕршывĕн пурнăçĕпе пĕр тан пыракан шкул тăвассишĕн большевикла кĕрешме ыйтать. Пирĕн шкул Сталин епохине тивĕçлĕ шкул пулмала.

РСФС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çеççийĕ

РСФС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çеççин 1938 çулхи ийулĕн 15-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен

Информацилĕ пĕлтерӳ

Ийулĕн 15-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, РСФСР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра, Кремльре, РСФС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çеççийĕ уçăлнă.

Депутат И. И. Çидăрăв йулташ сĕнĕвĕ тăрăх, Çеççине Верховнăй Советăн Горький облаçĕнчи Спасск суйлав округĕнчен суйланă чи ватă депутачĕ „Заря коммунизма" йалхуçалăх ертелĕн колхозникĕ Степан Никитич Барышĕв уçать.

Барышĕв йулташ сăмахĕ хыççăн Верховнăй Совет РСФСР Верховнăй Совечĕн председателне тата председател заместителĕсене суйлама пуçлать.

РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателне пурте пĕр сасăпа Андрей Александрăвич Жданăв йулташа суйланă; Председател заместителĕсене Алим Халилăвич Тынчерăв йулташа тата Прасковйă Çеменăвнă Макарăвă йулташа суйланă.

Верховнăй Совет Çеççи ĕçĕн регламентне çапла йышăннă:

1. РСФСР Верховнăй Совет Çеççин ларăвĕсем ирхине 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла 3 сехетчен, каçхине 6 сехетрен пуçласа 9 сехете çитиччен пулса иртеççĕ.

2. РСФСР Верховнăй Совет Çеççин кун йĕркинчи ыйтусем тăрăх доклад тума докладчиксене РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ çирĕплетет.

3. РСФСР Верховнăй Совет депутачĕсен кашни ушкăнĕ, унта 50 çынран кайа мар шутланать пулсан, хăйĕн содокладчикĕсене тăратма пултарать.

4. Доклад тума докладчиксене пĕр сехет тата йулашкинчен калама—30 минут параççĕ, содоклад тума содоклачиксене—30 минут, йулашкинчен калама—15 минут параççĕ.

5. Оратăрсене сăмах калама малтанхи хут 20 минут, иккĕмĕш хут—5 минут параççĕ.

6. Харпăрхăй паракан зайавленисемпе фактăлă справкăсене хут çине çырса памала. вĕсене РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ, алла илнĕ хыççăнах йе. вĕсен содержанине кура, лару вĕçĕнче вуласа кăтартать.

7. Черетсĕр ыйтусене хут çине çырса памала, вĕсене РСФСР Верховнăй Совет Председателĕ çийĕнчех вуласа кăтартать.

8. Кун йĕрки çинчен калама 5 минут параççĕ.

9. Сасăласси çинчен каласма 3 минут параççĕ.

Мускав, Ленинград хулисен, Воронежпа Куйбышĕв облаçĕсен, Тутар, Башкир, Чечено Ингуш автономлă республикĕсен депутачĕсен ушкăнĕнчен А. И. Угарăв йулташ панă сĕнӳ тăрăх РСФСР Верховнăй Совечĕ çакăн пек кун йĕрки йышăннă.

1. РСФСР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççине суйласси.

2. РСФСР Верховнăй Совечĕн Йаланлăх Комиççийĕсем çинчен.

3. РСФСР Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси.

4. РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумне суйласси:

а) РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателне;

б) РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председател заместителĕсене;

в) РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Секретарне;

г) РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн членĕсене суйласси.

5. РСФСР Правителствине—РСФСР Халăх Комиссарĕсен Советне туса хурасси.

6. РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсене хăйсен депутат обйазаннăçĕсене пурнăçа кĕртнипе çыхăнса тăракан расхутсене тӳлесси çинчен.

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслемешкĕн Мандат Комиççи суйланă, вăл Комиççине кĕреççĕ:

РСФСР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççи председателĕ Алексей Иванăвич Шахурин (Йарославль облаçĕнчи Галич суйлав округĕнчен суйланă депутат).

РСФСР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççи членĕсем:

1. Федăр Çеменăвич Антонăв—Ойрот-Турск округĕнчен суйланă депутат, Алтай крайĕ.
2. Магомед Магомедăвич Арбулийĕв—Хунзах округĕнчен суйланă депутат, Дагестан АССР.
3. Владимир Александрăвич Йершов—Северск округĕнчен суйланă депутат, Краснодар крайĕ.
4. Зугре Закирăвнă Закирăвă—Мензелинск округĕнчен суйланă депутат, Тутар АССР.
5. Иван Николайĕвич Куприйанăв—Атăшевск округĕнчен суйланă депутат, Мордва АССР.
6. Георгий Иванăвич Овчинникăв—Харовск округĕнчен суйланă депутат, Вологдă облаçĕ.
7. Василий Прохорăвич Пронин—Ростокинск округĕнчен суйланă депутат, Мускав хули.
8. Сергей Львович Соболĕв—Герцен округĕнчен суйланă депутат, Мускав хули.
9. Александр Михайлăвич Столйаров—Уфари Кирăв хула округĕнчен суйланă депутат, Башкир АССР.
10. Алексей Георгийĕвич Тараненко—Кизляр округĕнчен суйланă депутат, Орджоникидзе крайĕ.

Мандат Комиççине суйланă хыççăн РСФСР Верховнăй Совет Çеççин пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать.

РСФСР Верховнăй Совечĕн Çеççине уçнă чухне депутат С. Н. Барышĕв каланă сăмахран

Хаклă йулташсем! Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕнчи халăхсем пире çĕршыва тытса пырас ĕçе туса тăма хушрĕç. Пире пысăккăн шанчĕç тата пысăк чыс турĕç. Манăн: хамăр халах шанăçне тӳрре кăларас тесе епĕр алăсене пушанма памасăр ĕçлĕпĕр, тесе калас килет. Епĕр пире тăван Иосиф Виссарионăвич Сталин ĕçлеме вĕрентнĕ пек ĕçлĕпĕр! (Тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Сталин йулташа чысласа темиçе хутчен саламлă сăмахсем каласа кăшкăрнисем илтĕнеççĕ).

Епĕр нумайăх пулмасть хамăр республика Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем пулса иртнĕ хуласемпе йалсенчен килнĕ. Вăл суйлавсенче пирĕн республикăри халăхсем хăйсем хамăрăн тăван та хаклă коммунисла партипе совет влаçĕн политикине пĕтĕмĕшпех те туллин шанса тăнине (тăвăллăн алă çупаççĕ), хăйсем хамăрăн аслă Совет Сойузĕнчи пĕтĕм ĕççыннисен çулпуçне, учителне Сталин йулташа чĕререн йуратса тăнине кăтартса пачĕç. (Нумайччен шавлăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. „Урра!", „Сывă пултăр Сталин йулташ!" тесе кăшкăраççĕ).

Ленин—Сталин партийĕ тата совет влаçĕ пире социалисăмлă пурнăçăн çутă çулĕ çине илсе тухрĕç. Совет влаçĕ пире пусмăртан ĕмĕрлĕхех хăтарчĕ. Халь ĕнтĕ хамăрăн пуйан та хаваслă пурнăçа епĕр хамăр тăватпăр.

Тăшмансем пиртен пирĕн çĕнтерӳсене туртса илме, пире кайала ĕлĕкхи ылханлă пурнăç патне тавăрма шухăшлаççĕ. Епĕ калатăп—Ку вăл пихăçан та пулас çук! (Нумайчен алă çупаççĕ).

Епĕр пĕтĕм тăшмансене, пĕтĕм шпионсене, урнă йытăсене пĕтернĕ пекех, пĕтерĕпĕр! (Алă çупаççĕ).

Рабочисемпе хресченсем хăйсен телейне хакласçĕ, ăна сыхлаççĕ. Епĕр, хресченсем, вăл телейе колхозсенче тупрăмăр. Кивĕ режим вăхăтĕнче хресченĕн шăпи—выçлăх тата чухăнлăх пулнă. Халь ĕнтĕ колхоз—çав тери аслă вăй, вăл сăрт-тусене куçарса лартма та пултарать! Хресченсем колхозсене кĕрсе пĕрлешрĕç, улăпла вăй илчĕç. çакна пула пирĕн çĕр те пире лайăхрах тăхăнма пуçларĕ. Колхозлă ĕç, пире социалисăмлă промышленнăç, хамăрăн рабочисем çителĕклĕ туса панă сталинла машинăсем—пире пуйан тухăçлă тырпул туса параççĕ.

Пирĕн пурнăçра пурте çителĕклĕ, епĕр пирĕн пурнăç тата лайăхрах пуласса пĕлсе тăратпăр. Епĕр пĕлетпĕр, пире çĕнĕ çĕнтерӳсем патне хамăрăн большевикла парти, пирĕн йуратнă çулпуç Сталин йулташ йертсе пырать. (Тăвăллăн алă çупаççĕ, „Урра!" „Сывă пултăр Сталин йулташ!" тесе кăшкăрнисем илтĕнеççĕ).

Епĕ колхозри сатăç, тĕрлĕ ӳсентăрансем пăхса ӳстеретĕп.

Сталин йулташ та сатăç—пире кашнинех асăрхаса тăрать, йуратса ĕçлесе аслă çынсем, хăйулă та паттăр льотчиксем тата геройсем туса пăхса ӳстерет. Епĕ ватă вырăс хресченĕ, çур ĕмĕре пĕр чыс курмасăр пурăнса иртернĕскер, халь ĕнтĕ çак телейлĕ куна пурăнса çитрĕм, аслă Российă Республикин Верховнăй влаç оргăнĕн пĕрремĕш Çеççине уçатăп. Çакăншăн ĕнтĕ тавтапуç партипе совет влаçне, тавтапуç Сталин йулташа! (Тăвăллăн алă çупни овацийе куçса кĕрлесе кайать. Вырăнсенчен: „Сталин йулташа—урра!", „Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!" тесе кăшкăрнисем илтĕнеççĕ).

Пире суйланă чухне халăх пире: хамăр тăван çĕршывăмăра куç шăрçи пек сыхлас пулать тесе наказ пачĕ. Епĕр пĕлетпĕр, фашистсем пире хирĕç вăрçă хатĕрлеççĕ, анчах епĕр вĕсем йунаниччен хăрамастпăр! Пирĕн государствă тĕреклĕ хĕçпăшалланнă. Пирĕн хăватлă, паттăр та хăйулă Хĕрлĕ Çар пур. (Алă çупаççĕ). Аслати кĕрлесе кайсассăн; епĕр пурте пĕр çын пек пулса тăван çĕршыва хӳтĕлеме тăрăпăр. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Депутат йулташсем! Хамăрăн мĕн пуррине пĕтĕмĕшпех—вĕсене пĕтĕмĕшпех хамăрăн Ленин—Сталин партийĕ йертсĕ пынине кĕрешсе илнĕ. (Нумайччен чарăнмасăр, тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сывă пултăр большевиксен партийĕ! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сывă пултăр совет влаçĕ! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сывă пултăр пирĕн тăван çулпуç, учител Сталин йулташ! (Залри пĕтĕм халăх ура çине тăрать. Сталин йулташа чысласа РСФС Республикинчи халăхсен тĕрлĕ чĕлхипе кăшкăра-кăшкăра каланă саламлă сăмахсем йанраса кайаççĕ. Оваци нумайччен лăпланмасăр кĕрлесе тăрать).

Йулташсем! РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çеççийĕ уçăлнă тесе шутлатăп.

(Нумайччен чарăнмасăр тăвăллăн алă çупаççĕ. Депутатсем, ура çине тăрса, Сталин йулташа чысласа хĕрӳлĕ оваци тăваççĕ. Сталин, Молатăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Андрейĕв, Микойан, Жданăв тата Йежов йулташсене чысласа саламлă сăмахсем каласа кăшкăрнисем илтĕнеççĕ).

Столицăри ĕççыннисем халăх суйласа йанă çынсене саламлаççĕ

Ийулĕн 15-мĕшĕнче Мускаври савăтсемпе хапрăксенче, РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççийĕ уçăлнă йатпа, нумай халăхлă митингсем пулса иртнĕ. Халăх суйласа йанă çынсене столицăри ĕççыннисем пит пысăк хаваслăхпа саламлаççĕ.

„Серп и молот" коллективĕн митингĕнче савăтри рабочисем, инженерла-техниклă работниксем тата служащисем 5.000 çын пулнă. Митингра йышăннă резолюцире çапла каланă:

„Салам сире, халăх суйласа йанă çынсем, РСФСР Верховнăй Совет депутачĕсем! Ленин сăнарлă политикăлă деятелсем пулăр. Пирĕн пĕрремĕш депутат, йуратнă атте, учител тата тус аслă Сталин пекех халăхăн шанчăклă ывăлĕсем пулăр".

„Красный пролетарий" савăтри рабочисем çапла калаççĕ:

„Пĕрремĕш сборочнăй тата санавлă цехсен коллективĕсем, РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççийĕ уçăлнине паллă туса, плана тултарассишĕн, продукци чи лайăх пахалăхлă пулмала тăвассишĕн, стахановла йухăма малала ӳстерессишĕн кĕрешсе халиччен хинчен икĕ хут вăйлăрах ĕçлеме пулаççĕ".

(ТАСС).

П. Д. Оçипенко, В. Ф. Ломако, тата М. М. Раскова йулташсене Ленин ордене панă

Пĕр моторлă „МП-1" гидросамолетпа Севастополь—Архангельск маршрутпа пĕр лармасăр вĕçес тĕлĕшпе правителства панă заданине çитĕнӳлĕн пурнăçланăшăн тата çав вĕçев вăхăтĕнче паттăр пулнăшăн ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ кăларнă Указ тăрăх аслă лейтенанта Полинă Денисăвнă Оçипенкона, аслă лейтенанта Верă Федăрăвнă Ломакона тата штурман лейтенанта Маринă Михайлăвнă Раскована Ленин орденĕ панă.

(ТАСС).

Çĕнтерекенсем таварăнни

Хăйулă та паттăр льотчиксене Коккинаки тата Брйандинский йулташсене Мускавра кĕтсе илни

Ийулĕн 15-мĕшĕнче Мускав—Владивосток районĕ маршрутпа пĕр лармасăр хăвăрт вĕçсе тухнă мухтавлă Сталин питомецĕсене—Владимир Константинăвич Коккинакипе Александр Матвейĕвич Брйандинский йулташсене Мускав хаваслăн кĕтсе илчĕ.

Советсен çĕршывĕн мухтавлă соколĕсене, сталинла заданине чаплăн пурнăçа кĕртнĕскерсене, кĕтсе илмешкĕн Фрунзе йачĕпе тăракан Тĕп аеродром çине Мускаври ĕççыннисен делегацисем нумай пынă.

18 сехет те 15 минутра аеродром тĕлĕнче икĕ моторлă илемлĕ самолет—„Мускав" курăнса кайать, унпа пĕрле икĕ çар самолечĕ вĕçсе пыраççĕ. Тата тепĕр темиçе минутран вăл бетонлă сул çине анса ларать.

Коккинакипе Брйандинский йулташсем трибунă çине хăпараççĕ, çак вăхăтра алă çупни аслати пек кĕрлесе тăрать. Çак калама çук чаплă вĕçеве хавхалантарса тăнă çынна—халăхсен çулпуçне Сталин йулташа, герой льотчиксене чысласа хаваслăн калакан саламлă сăмахсем йантра-йантра кайаççĕ.

Çавăнтах аеродром çинче митинг пулса иртет, вăл митингра вĕçеве организацилес тĕлĕшпе ĕçленĕ правителствă комиççин председателĕ ССРС Оборонă промышленнăçĕн Халăх Комиссарĕ М. М. Каганович йулташ, Менжинский йачĕпе тăракан савăтри рабочи-стахановец Баранăв йулташ, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Сывлăш Çар вăйĕсен начальникĕ иккĕмĕш рангри командарм Локтионăв йулташ тухса каланă.

Малала Коккинакипе Брйандинский йулташсем тухса каланă, вĕсем хăйсен чаплă вĕçевĕ çинчен кĕскен те уççăн каласа панă. Пухăннă халăх вĕсен сăмахне хавхаланса алă çупса саламлать.

Митинг пĕтнĕ хыççăн Коккинакипе Брйандинский йулташсем хăйсене çывăх çынсемпе, тăванĕсемпе пĕрле, чечексемпе илемлетнĕ машинăсем çине ларса, хулана кайаççĕ.

(ТАСС).

Вăйлă тырпула кĕске срукра, пĕр тăкаксăр пухса кĕрер!

Политикăлă-массăлă ĕçсене уйра—бригадăсенче, звеносенче туса пымала!

Политикăлă агитаци ĕçне уйа куçарар

Республикăри колхозсен уйхирĕсенче вăйлă тырпул пиçсе çитрĕ. Кăнтăр йенчи (Йелчĕк, Патăрйел, Шăмăршă, Шанкăртам) районĕсенчи колхозсем ыраш вырма тухрĕç. Ытти районсенчи колхозсем те çак çывăх кунсенчех тырпула уйхиртен пухса кĕме тытăнаççĕ.

Ĕнтĕ ĕçлеме пултаракансем пурте уйра пулаççĕ. Бригадăсенче, звеносенче хĕрўлĕ ĕç пырат. Жнейкăсемпе ĕçлекенсем, машиниссем, комбайнерсем, трактăриссем, кĕлте çыхакансем, çĕмел тăвакансем—пĕр сăмахпа каласан, пурте вăйлă тырпула кĕске срукра пуçтарса кĕртессишĕн, стаханăвла ĕçтухăçлăхĕшĕн социалисăмла ăмăртса ĕçлеççĕ.

Пĕтĕм тырпула пĕр пучах уйа тăкса хăвармасăр пуçтарса кĕртер! Вăйлă тырпула лайăх пуçтарса кĕртсе çирĕп сыхлар, государствă умĕнчи обйазательствăсене срукра тултарар!—акă çаксем пулаççĕ ĕнтĕ тырпула уйхиртен пухса кĕртнĕ вăхăтри тĕп лозунгсем. Çак тĕп шухăшсене кашни колхозник патне çитермеле. Çавăнпа халĕ колхозсенче, бригадăсемпе звеносенче партилĕ-политикăлă ĕç нихăçанхинчен те вăйлă пулмала. Чи лайăх пропагандиссен, агитатăрсен, кулљтработниксен уйа тухмала. Кунта массăлă-политикăлă ĕçĕн пур формисемпе те усă курмала. Калаçусем, хаçат-журнал вуласа парасси, радио—халĕ пурте уйра пулмала. Массăлă-политикăлă агитаци ĕçне бољшевикла сарма иртнĕ суйлав кампани вăхăтĕнче ўссе çитĕннĕ агитатăрсене, организатăрсене, массовиксене анлăн хутшăнтармала.

Анчах çакна хăшпĕр çĕрте ăнланса илмеççĕ. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнче, Штанаш, Турхан, Упукушкĕн йалсовечĕсенче халĕ массăлă-политикăлă ĕçе куллен туса пыма мар, суйлав вăхăтĕнче ĕçленĕ агитатăрсен коллективĕсене салатса йама ĕлкĕрнĕ те. Çĕрпў районĕнчен çырса пĕлтернĕ тăрăх, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ хыççăн Йĕкĕрвар, Кăшаркасси, Чурачăк йалсовечĕсенче политикăлă агитаци ĕçĕ пачах сўнсе ларнă. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулхи тырпула пухса кĕртесси çинчен“ йышăннă постановленине кашни колхозник пĕлсе тăмала пулсан, асăннă йалсовечĕсенчи колхозсенче Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленине колхозниксене каласа ăнлантарса та паман. Çавăнпа Çĕрпў тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи хаçатсен страницисенче „Колхоз тырпула пуçтарса кĕртме хатĕр мар“ тесе çырнисем нумайăшĕнчен нимĕн тĕлĕнмели те çук. Кунашкал фактсем ытти районсенче те пур.

Çаксем пурте партипе совет организацисем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанинче политикăлă агитаци ĕçĕнче тунă çитĕнўсене çирĕплетессишĕн çине тăрса ĕçлеменни çинчен калаççĕ.

Тырпула уйхиртен пухса кĕртнĕ чухне массăлă-политикăлă ĕçе анлăн сарас çĕрте малта пыракан колхозниксен-стаханăвĕçсен паха опытне пĕтĕм колхозниксен куллехи ĕçĕ çине куçарасси питĕ пысăк вырăнта тăрат. Кунта пичетĕн—районсенчи, уйрăмах колхозсенчи стена хаçачĕсен ролĕ пуринчен те ытларах пысăк.

Районти хаçат тырпула пуçтарса кĕртес ĕçе оперативлă, конкретлă çутатса пыни колхоз уйхирĕсенче стаханăвла йухăма анлăн сарса пыма пулăшат. Çапла пулин те, Йелчĕкпе Патăрйел районĕсенчи хаçатсем колхозсен уйхирти малтанхи кунсенчи ĕçĕсене тĕплĕн çутатаймарĕç. Хаçатсем „çав-çав“ колхозсем ыраш вырма тухрĕç тесе çырнипех иртсе карĕç. Уйхирти малтанхи кунсенчи ĕçсен çитменлĕхĕсене тишкĕрсе, лайăх йенĕсене кăтартса, малашне районти колхозсем умне конкретлă задачăсем кăларса тăратмарĕç.

Уйра—бригадăра стена хаçачĕ кăларни, унта колхозниксен куллехи ĕçĕсене йĕркелĕ çутатса пыни—парти организацисен аллинче вăйлă хĕçпăшал пулат. Çакна Куславкка районĕнчи „Динамо“ колхозри „Ленин çулĕпе“ (ответлă редактăрĕ Тимофейĕв) хаçат ĕçĕнчен лайăх курма пулат. „Ленин çулĕпе“ стена хаçачĕ уйхирте колхозниксем мĕнле ĕçленине питĕ тĕплĕн çутатса пырат. Редколлеги ийуљ уйăхĕнчех тырпула уйхиртен пухса кĕртнĕ вăхатра уйра мĕн-мĕн тумаллине палăртса хунă. Хаçата вуласан, хăш бригадăн тырă мĕнле ўснине хăв кайса курнă пек пĕлме пулат. Анчах пур çĕрте те кун пек мар. Тырă вырма пайан-ыран тухас тенĕ чухне Çĕрпў районĕнчи Тивĕшри, Актайри колхозсенче стена хаçачĕсем тухма чарăннă. Çакăн пекех тата Ишлейри, Пархикассинчи, Тăранти (Ишлей районĕ) колхозсенче те стена хаçачĕсем тухмаççĕ. Тырă вырнă чухне уйра—бригадăсенче стена хаçачĕсем кăлармă редактăрсем те уйăрман.

Вăйлă тырпула пухса кĕме пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемеле. Тырпула пуçтарса кĕртесси—вăйлă тырпулшăн кĕрешмелли татăклă тапхăр. Кунта ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанни, лăпланни, мăнкăмăлланни, тимсĕрлĕх пулмала мар. Тырпула ăнăçлă пуçтарса кĕртесси—ĕçе, çав шутрах массăлă-политикăлă ĕçе лайăх организацилениччен килет. Халĕ парти, совет, комсомол организацисен, хаçат-журналсен ĕçĕ уйра—бригадăсене, звеносене куçмала. Пĕтĕм ĕç тырпула кĕске срукра пухса кĕртсе государствă умĕнчи обйазательствăсене вăхăтра тултарассине пăхăнмала.

Шăнкăртам районĕнче тырă выраççĕ

Ийулĕн 12—13-мĕшĕсенче Шăнкăртам районĕнчи колхозсем выранăн-выранăн суйласа ыраш вырма тухрĕç. Ийулĕн 14-мĕшне 10 колхозра тырă вырма тытăннă. Ийулĕн 15-мĕшĕнче уйрăм колхозсем тырпулсене массăлăн пухса кĕме тытăнчĕç.

Колхоз уйхирĕсенче тырпулсене тăкаксăр, кăтартулăн пухса кĕрес тĕлĕшпе социалисăмлă ăмăрту сарăлса пырат. Уй ĕçĕн малтанхи кунĕнчех колхозниксемпе колхозницăсем ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăгартаççĕ. „Нариман“ колхозра Б. Нистахăв колхозник жнейкăпа çменăра 7,63 гектар вырат. Çак колхозра кĕлте çыхакансем хушшинче те ăмăртса ĕçлесси сарăлса пырат. Нигматулина колхозницă пĕр çменăра 815 кĕлте, Ниначĕвă—670 кĕлте, Гарипăвă—600 кĕлте çыхса пыраççĕ.

„Кзыл Юлдус“ колхозра Р. Мухамедзйанав жнейкăпа çменă хушшинче 8 гектар вырат. Хайрулинă колхозницă йертсе пыракан звено Аймуханăвă звенипе ăмăртат. Пĕрремĕш звенори кĕлте çыхакансем—Феизовă тата Ахметовă колхозницăсем хăйсен нормисене 170—175 процент таран тултарса пыраççĕ. Иккĕмĕш звенори колхозницăсем те йулса пымаççĕ, вĕсем те хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Тырă вырма тухма хатĕр

Вăрмар районĕнчи колхозсенче утă çулнă вăхăтра ăмăртса ĕçлесси сарăлса пычĕ. Çавна май утăна кĕске вăхăтрах çулса пĕтерсе, капана хыврĕç. Аслă Чакри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз кăçал йышлă выљăх-чĕрлĕх валљи апат çителĕклĕ хатĕрлерĕ. 15 гектар çаран утти, 35 гектар клевĕр, 55 гектар виккă çулса утă тунă. Государствăна утă парса татнă.

Ыраш пулса çитет. Çак кунсенчех колхозри бригадăсем ыраш вырма тухаççĕ. Тырпулсене пухса кĕме колхоз лайăх хатĕрленнĕ. Колхозăн, бригадăсен ĕç планĕсем пур. Ĕç планĕ тăрăх кĕрхи тырăсене 7 кун хушшинче, çуртрисене 10 кун хушшинче пухса кĕмеле. Тырпулсене планра кăтартнă срукра пухса кĕме колхозăн вăй çителĕклĕ. Колхозниксемпе колхозницăсене—пурне те ĕçсем кăтартса панă. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене халех лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Колхозра 4 бригадă. Вĕсем ăмăртса ĕçлеме пĕр-пĕрин хушшинче ăмăрту догăварĕсем тунă. Йалхуçалăх машинисем „ хатĕр. Молотилкăна итем çине майлаштарса лартнă. Урапасем, михĕсемпе шăвалăксем çителĕклĕ.

Бригадăсенчи агитатăрсем, стена хаçат редактăрĕсем хăйсен ĕçĕсене тума тытăнчĕç.

Тырпулсенĕ уйран пухса кĕнĕ вăхăтра столовăй тата 50 ача валљи йаслĕ ĕçлемеле.

В. Андрийанăв.

Стаханăвĕцсен йышĕ ўссех пырат

ЙЕЛЧĔК, ийулĕн 16-мĕшĕ (хамăр корр., телефон тăрăх). Районри нумай колхозсенче тырă пиçсе çитнĕ май массăлăн вырма тухрĕç.

Ийулĕн 16-мĕшне „Трактăр“ колхоз—50 гектар, „Сухаç“—35 гектар, „КИМ“ колхоз—75 гектар ыраш вырнă. Тырă вырма тухнă пур колхозсенче те столовăйсемпе ача йаслисем организациленĕ. Столовăй тата ача йаслисем организациленни колхозниксен ĕçлес хастарлăхне татах та хăпартрĕ. Кăçал ăнса пулнă тырпула пĕр тăкаксăр, кĕске срукра пухса кĕртес ĕçре стаханăвла йухăм кунран-кунах сарăлса пырат.

„Трактăр“ колхозри 3-мĕш бригадăри Е. Чернова йертсе пыракан звенора Иванова—420 кĕлте, Ф. Чернова—435 кĕлте, Ф. Йакăвлĕва—448 кĕлте кашни куллен çыхса пыраççĕ. Ку звено ытти звеносенчен малта пыракан звено шутланат.

„Сухаç“ колхозри 4-мĕш бригадăри П. Романăвă йертсе пыракан звенори Р. Константинăвă, П. Романăвă колхозницăсем кулленхи ĕç нормине 150-проценшер ытла тултарса пыраççĕ.

Çавнашкалах Кириллăв машиновед—жнейкăпа—6 гектар, Г. Куçмин—7 гектар кашни куллен выраса пыраççĕ.

Ĕç лайăх пыракан колхозсенче пуринче те кулљтурăлă-массăлă ĕçе лайăх организациленĕ. Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче патефон, радио йанраса çеç ларат. Бригадăри политвулавçăсем хаçат-журналсем вуласа пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса параççĕ.

Т. Майорăв.

Ыраш вырма тухрĕç

ТРАК (телефон тăрăх). Ийулĕн 16-мĕшĕнче Именкассинчи „Малала“ тата Кушарти Буденнăй йачĕпе тăракан колхозсем ыраша суйласа вырма тухрĕç.

Буденнăй йачĕпе тăракан колхозра бригадăсенче кулљтмассăлă ĕçе лайăх организациленĕ. Каннă вăхăтра колхозниксене хаçат-журналсем вуласа параççĕ.

Кĕске вăхăтра, тăкаксăр пуçтарса кĕртетпĕр

ЙЕЛЧĔК. „Хĕрлĕ йалав“ колхоз тырпула пĕр тăкаксăр, кĕске срукра пуçтарса кĕме тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕ. Кăçал колхозăн хирĕнчи тырпулсем пит таса кашласа лараççĕ.

Колхозниксем тырă ўснине пăхса саванаççĕ. Вырма тухаччен 4 жнейкă, 3 молотилкă, 2 сортировкă йусаса хатĕрлесе лартнă. Жнейкăпа ĕçлемелли лашасене икĕ ерне малтан вăйлă апат çине тăратнă. Колхозниксем хушшинче ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе парти Обкомĕ тырăсене пуçтарса кĕртесси çинчен йышăннă постановленисене сўтсе-йавса, уйри тырпула кĕске срукра пуçтарса кĕме ĕç планĕ тунă. План тăрăх кĕрхи тырра 5 кун хушшинче, çурхи тырăсене 6 кун хушшинче пуçтарса кĕртмеле.

Ыраш вырма тухнă кунтан 4-мĕш кунĕнче аван çапса пирвайхи лайăх тырра государствăна пама палăртнă. Тырă леçме кайакансене те уйăрса хунă. Уйри ĕç пĕтиччеччен 127 çынна валљи столовăй ĕçлет. Кунсăр пуçне 50 ача валљи йаслĕ усна. Бригадăсенче стена хаçачĕсене вăхăтра кăларса тăраççĕ. Каннă вăхăтра вулавçăсем хаçатсем вуласа ăнлантарса параççĕ. „Хĕрлĕ йалав“ колхоз вăйлă тырпула вăхăтра пуçтарса кĕртессишĕн „Çĕнĕ çул“ колхозпа ăмăртса ĕçлет.

Пур ĕçре те коммунист Н. Скворцов йулташ йертсе выракан иккĕмĕш бригада малта пырат.

Ф. Бељайĕв.

Çитменлĕхсене халех пĕтерес пулат

Патăрйел районĕнче сталинла вăйлă тырпула пухса кĕртес ĕç массăлăн пуçланчĕ. Пиçсе çитнĕ тырра вырма тухакан колхозсен йышĕ кулленех йышланса пырат.

„РОКК“ колхозра тырă вырнă вăхăтра кашни бригадăрах столовăй организациленĕ. Ку столовăйсем уйри тырпула вырса пĕтериччченех ĕçлеççĕ. Ĕç вăхăтĕнче столовăй организацилени колхозниксен ĕçлес хастарлăхне татах та çĕклерĕ.

Колхозăн ĕç планĕ тăрăх çурлапа выраканăн кашни куллен 0,10 гектар вырса пымала пулсан, 4-мĕш бригадăри С. Федăрăв, 3-мĕш бригадăри К. Салмина, И. Соловйовă йулташсем кулленхи ĕç нормине 200-шер процент тултарса пыраççĕ.

Кăçалхи ăнса пулнă тырпула пĕр тăкаксăр, кĕске срукра пухса кĕртмеле. Анчах районра малтанхи кунсенче чылай çитменлĕхсем палăрчĕç.

„Хĕрлĕ йалав“ колхоз уйри тырпула пухса кĕме кирлĕ пек хатĕрленсе тухман пирки 7 жнейкăран 3 жнейкине çĕмĕрнĕ. Ку колхозра ĕç планĕ туман. Çавăнпа та пĕр жнейкă хыççăн 18 çын кĕлте çыхас вырăнне 25—30 çын пĕр çĕре пуханса ĕçлеççĕ.

Тырă вырма тухнă малтанхи кунта Угаçăв йертсе пыракан бригадăра 15 колхозник ĕç патне тухман, бригадирĕ хăй те ĕçсе сўренĕ.

Çавнашкалах „Ленин çулĕ“ колхозра та тырă вырас ĕç ытла та сўрĕккĕн пуçланчĕ. Машинăпа вырнă тырра çыхмасăрах выртаççĕ. Районри ытти колхозсенче те тырă вырас ĕçе тивĕçлипе организацилемен пирки жнейкăсене йĕркелĕ ĕçлеттермеççĕ.

Н. Пушкин.

Вăхăт кĕтсе тăмаст

Пирĕн республикăри кăнтăр йенчи Йелчĕк, Патăрйел тата Шанкăртам районĕсенчи колхозсем тырă вырма тухрĕç. Çак кунсенчех ытти районсем те тырă вырма тухаççĕ. Анчах Шăхасан, Канаш, Вăрмар районĕсенче тырпулсене пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленмен. Шăхасан районĕнчи Чуракасси йалсоветне кĕрекен „Правда“ тата Шмидт йачĕпе тăракан колхозсенче ку вăхăтченех ампарсене дезинфекци туман. Кипекри Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхозра ампарсене йачĕшĕн кăна тасатнă пирки сăвăссем йулнă.

Шăхасан районĕнчи комбайнсемпе ĕçлеме палăртнă колхозсенче михĕсем çитмеççĕ. Буденнăй йачĕпе тăракан колхозра мĕн пурĕ те 16 михĕ çеç. „Чăваш Тепĕçтăвкомĕ“ колхозра та михĕсем пит сахал. Пуррисене çуса тасатса дезинфекци туман.

Чылай колхозсенче витнĕ итемсем çук, кивĕ итемсене йĕркене кĕртмен. Йалхуçалăх машинисене ĕçлеме йурăхлă туса çитермен.

МТС хăйĕн сложнăй молотилкисене, комбайнĕсене тасатмасăрах колхозсенĕ ăсатнă.

Шăхасан районĕнчи колхозсенче тырă типĕтмелисене йусама васкамаççĕ. Иртнĕ çулта ĕçленĕ тырă типĕтмелисем халь пĕри те ĕçлеме йурăхсăр.

Пĕлтĕр вăйлă тырпул туса илнипе Шăхасан районĕнчен 22 колхоз пĕтĕм сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕх илчĕç. Анчах çак колхозсенче те кăçал вăйлă тырпулшăн çине тăрса ĕçлени çук-ха. Çав колхозсем иртнĕ çулхи çитĕнўсемпе лăпланса ларнă пулас.

Н. Колеçникăв.

Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнине кĕтсе илер

1938 çулхи октăбĕрĕн 29-мĕшĕнче Совет Союзĕнчи халăхсем мухтавлă кун—ленинла-сталинла комсомол, бољшевикла партин пĕрремĕш помошникĕ, пĕтĕм тĕнчери револљуцилĕ çамрăксен кĕрешўри паттăр авангарчĕ 20 çул тултарнă куна кĕтсе илет. Паттăр та чаплă ĕçсен мухтавĕпе витĕннĕ ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă кун пĕтĕм совет çамрăкĕсен хавасла праçникĕ пулса тăрат. Ку вăл—хăйен çамрăк ăруне йуратакан пĕтĕм совет халăхĕн праçникĕ пулат.

ПСÇЛКС 15 çул тултарнă кун хамăран мухтавлă çамрăксен организацийĕ патне йанă хăйен тусла саламĕнче Сталин йулташ çапла çырнă: „Хăй пурнăçĕн вунпилĕк çулĕнче ленинла комсомол Ленинăн аслă йалавне малала хăйулăн йăтса пычĕ, мĕлйуншар çамрăк рабочисемпе хресченсене, мĕлйуншар çамрăк работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсене вăл йалав тавра çитĕнўлĕн пуçтарса пычĕ. Ленинла комсомол Ленин йалавне малашне те çўлте тытса пырĕ, ăна хамăрăн аслă кĕрешўн çĕнтерўлĕ вĕçĕ патне, социалисăм пĕтĕмĕшпех те туллин çĕнтерессипатне чыслăн йăтса çитерĕ, тесе шанса тăратăп“.

Хамăр çĕршыври социалисăм строительствинче комсомол пысăк вырăн йышăнса тăрат. Промышленнăçпа йалхуçалăхĕнче унăн ролĕ калама çук пысăк. Вăл государствă ĕçне активлăн хутшăнса ĕçлет, вăл пăхса çитĕнтернĕ чи лайăх çынсене ССР Союзĕн, союзлă тата авто онлă республикисен Верховнăй Совечĕсене суйланă.

Комсомол—Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Хĕрлĕ Флотĕнчи аслă вăй, унта комсомолĕцсем çар ĕçне тата политикăна вĕренсе хатĕрленес ĕçре малта пыракансем, командирсемпе комиссарсен помошникĕсем пулса тăраççĕ. Çарти чи лайăх комсомолĕцсене парти политрукĕсен заместителĕсен вырăнне шанса ларта.

Епĕр комсомолĕцсене аслă тăхпа техникăн, кулљтурăпа искусствăн пысăк та паллă деятелĕсем хушшинче куратпăр. Хăйсем Ленин—Сталин партине чунтан йуратса тăнине, уншăн тăрăшнине ĕçре кăтартса панă калама çук нумай талантлă çамрăксене пĕтĕм социалисăмлă хуçалăхри командăлă вырăнсене лартнă. Комсомол хăй бољшевикла партин шанчăклă помошникĕ пулса тăнине кăтартса пычĕ тата ăна вăл халь те ĕçре кăтартса пырат. Çавăнпа ĕнĕ халăх хăйĕн комсомолне çав тери йуратат! Çавăнпа ĕнтĕ комсомол йубилейĕ пĕтĕм халăх праçникĕ пулат!

Хăйсен пĕтĕм пурнăçĕпе, хăйсен пĕтĕм ĕçĕсемпе, хăйсен пĕтĕм шухăшĕ-кăмăлĕсемпе комсомолĕцсем хăйсен аслă амăшĕн—Пĕтĕм Союзри коммунисла партин тивĕçлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсем пуласшăн тăрăшаççĕ. Ленин—Сталин партийĕ хăйен ачине, комсомолĕцсене халăх тăшманĕсене курайман, вĕсемпе килĕшмен çынсем туса пăхса ўстерет. Парти комсомола чи лайăх воспитани парат: коммунисăм çĕнтерĕвĕшĕн пыракан кĕрешўре усă та паллă тĕллевлĕ, çирĕп характĕрлă, хăйулă та пĕр шиксĕр, паттăр пулма вĕрентет.

Ленин — Сталин партийĕ совет çамрăкĕсемшĕн, унăн материалла условийĕсене лайăхлатассишĕн, çамрăк ăрува çирĕп сывлăхлă, кулљтурăлă тăвассишĕн пĕр майах тăрăшат. Пирĕн çамрăксем бољшевикла парти тавра, унăн Тĕп Комитечĕпе Сталин йулташ тавра çирĕппĕн, таччăн пĕрлешсе пĕтĕçсе тăраççĕ. Ленин пек, Сталин пек пуласси,—çакă пулат ĕнтĕ совет çамрăкĕн таса та хаклă ĕмĕчĕ, ун пурнăçĕн тĕллевĕ.

Хăйĕн мухтавлă йубилейĕ патне çывхарса пырса, Совет Союзĕнчи çамрăксем хăйсем партине тата совет правительствине вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнине, хăйсен тăван çĕршывĕшĕн пуçа хума та хатĕррине кăтартса парас кăмăлпа çунаççĕ. Кашни çамрăк çынах комсомол 20 çул тултарнă куна пĕтĕм халăхпа пĕрле çĕнĕ çĕнтерў тунипе тата хăйне уйрăмăн çĕнĕ çĕнтерў тунипе паллă тума тăрăшат. Пирĕн çамрăксен çак тăрăшăвĕсене, вĕсен шухăш кăмăлĕсене, вĕсем мĕн çинчен шухăшланине Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автомобил савăтĕнчи çамрăк стаханăвĕçсемпе специалиссем, „Комсомольская правда“ хаçат страницисем çинче çамрăк патриотсем, аннемĕр-тăван çĕршыв валљи парнесем хатĕрлĕр, тесе хĕрўлĕн чĕнсе каланăскерсем, пит те лайăх каласа, кăтартса панă. Хăйсен бољшевикла хĕрўлĕ чĕнĕвĕнче совет автомобилĕсене тăвакан çамрăксем ПСÇЛКС 20 çул тултарнă тĕле хатĕрлевни çинчен çапла çыраççĕ:

„Тата ытларах çине тăрса, хăвна ху шеллемесĕр ĕçлес килет, тăван çĕршыв мухтавĕшĕн бољшевисăма тата лайăххах вĕренес килет. Комсомол 20 çул тултарнă йубилейĕ лайăх ĕçсем тунипе, аннемĕр-тăван çĕршыва мăра лайăх парнесем панипе паллă тăвас килет... ССР Союзĕнчи кашни çамрăк гражданин комсомол çирĕм çул тултарнине чысласа хăй тăван çĕршывне парне хатĕрлесе патăр“.

Автосавăтра ĕçлекенсен чĕнĕвне итлесе çĕршыври çамрăксем анлăн çĕкленчĕç. Тăван çĕршывăн тĕрлĕ вĕçĕсенчен хыпарсем—йубилейе чысласа пама парнесем хатĕрлени çинчен калакан хыпарсем килеççĕ. Дзержинский йачĕпе тăракан трехгорнăй мануфактурăн директăрĕ—комсомолĕц Шчеголĕв йулташ комсомол 20 çул тултарнă тĕле хапрăкра лайăх суртлă пир-авăр туса кăларас ĕçе алла илме сăмах парат. Ленинградри „Скороход“ хапрăкра мастăр-комсомолĕц Лажков йулташ çамрăксен стаханăвла участокне организацилет. Новосибирскри „Сибметаллстрой“ савăтĕнче çамрăк стаханăвĕçсем пĕрмайах икшер нормă тултарса пыма сăмах панă. Кийеври радиоклубри радио йуратакансемпе специалиссем хаљхи вăхатри çĕнĕ радиоприйомник конструкцилеме пулнă. Сталинградри аероклуб учљочĕсем—лайăх пилотсем пулма сăмах панă. Харькăв облаçĕнчи, Красноград районĕнчи комбайнерсем тырпула срукченех тата пĕр тăкаксăр пухса илмешкĕн хăйсем хушшинче ăмăрту пуçласа йанă.

Кашни облаçрах, кашни районрах комсомолĕцсем комсомол 20 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленес ĕçе пушă шавсăр туса иртĕрмеле, парадлă шавра бољшевикла чĕрĕ ĕç сухалса ан кайтăр. Пирĕн çамрăксем комсомолăн мухтавлă йубилейне тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн çĕнĕ пысăк çитĕнўсем тунипе тивĕçлĕн кĕтсе илме пĕлĕç.

ПСÇЛКС 20 çул тултарнă кун сталинла виççĕмĕш пилĕкçулăн пĕрремĕш çулĕ тĕлне килсе тухрĕ. Хăйĕн пуçарулăхĕпе чапланса тăракан пирĕн çамрăксен кăçалхи çулталăк планне тултарассишĕн, халăх хуçалăхĕн кайа йулса пыракан участокĕсене малала туртассишĕн тата активлăнрах та хĕрўлĕнрех кĕрешес пулат. Хаљхи вăхăтра Донбассри шахтăсене комсомолĕцсен çĕнĕ отрйачĕ кайнă, çавăн пекех тата комсомолĕцсене вăрманта ĕçлеме чĕнсе пухас ĕç пырат. Донбассра та, вăрман ĕçĕнче те комсомолĕцсен пĕтĕм çамрăксемпе пĕрле, комсомол 20 çул тултарнă куна кăмрăк кăларас планпа вăрман хатĕрлес, йăвăç йуçтарас плана тултарнипе тата ытлашшипех те тултарнипе паллă тăвас пулат. Комсомолĕцсем-металлургсем, торф кăларнă çĕрте ĕçлекенсем, нефт кăлармалли шăтăксем шăтарса тăвакансем, коксовиксем, пăхăр ирĕлтерекенсем, пир авăр тĕртекен çамрăк арçынсемпе хĕрсем, шыв транспăртенче ĕçлекенсем—çакна асра тытма тивĕç: хуçалăхăн вĕсем ĕçлекен отрăçлисем плана тултараймаççĕ-ха, çавăнпа та кайа йулса пынине пĕтерессишĕн кĕрешĕве вăйлатас пулат.

Çамрăк колхозниксем кăçал хăйсене калама çук чаплăн кăтартса пама пултараççĕ. Тырăсен, сахăр кăшманĕн, пахча-çимĕçсен, çĕрмакĕн, йĕтĕнĕн пуйан тухăçне хăвăрт та пĕр тăкаксăр пухса илессе!—ку лозунг йалти çамрăксен хастарлăхĕн çĕнĕ кумне çĕклесе йама тивĕç. Йалта кашни çамрăк çынах, сталинла 7—8 мĕлйард пăт тырă тухăçĕшĕн пыракан кĕрешўре хăй активлă тăрăшса ĕçлени çинчен октăбĕрĕн 29-мĕшĕнче рапăрт парас правăна кĕрешсе илтĕр.

Комсомол 20 çул тултарнă кун тĕлне тунă çĕнтерўсен рапăртĕнче комсомол çамрăксене тата ачасене политикăлă тата кулљтурăлă воспитани парас ĕçре тунă çитĕнўсем паллă вырăн йышăнса тăма тивĕç. Ленин завечĕ—вĕренмеле, вĕренмеле татах та вĕренмеле, тени, Сталин: „ленинисăма вĕренмеле тата тепĕр хут та вĕренмеле“ тесе кăтартса пани, комсомолла пĕтĕм ĕçĕн тĕп вырăнĕнче тăмала. Çавăнпа ĕнтĕ—çамрăксене вĕрентес ĕç çине, шкула çирĕплетес, пионерсемпе пĕтĕм ачасене воспитани парас ĕç çине ытларах пысăк тимлĕхпе пăхас пулат Воспитани парас ĕç комсомолра тĕп вырăнта тăракан задачă пулнă; вăл малашне те çав вырăнтах пулĕ.

Çине тăрса ĕçленĕ вăхăтра, чĕререн тăрăшса вĕреннĕ вăхăтра çамрăксем капиталисăмлă йĕри-тавралăх çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен пĕр минутлăха та манмала мар. Совет çамрăкĕсен, çывхарса килекен вăрçă кĕрле-кĕрле кайнине уççăн илтмешкĕн, çивчĕ хăлхалă пулас пулат. Фашисла авантўрисен тата вĕсен ирсĕр те ылханлă тарçисен—троцкисла бухаринла шпионсемпе çывăхлĕрен-сен тăшманла махинацийĕсене уççăн курса тăмашкăн, совет çамрăкĕсен çивĕç куçлă пулас пулат. Сисĕмлĕ пулар! Çĕршывăн оборона тĕрекне тата çўлерех çĕклер, çар ĕç пĕлўлĕхне тата авăрах сарса йарар. Осоавиахима тĕреклетер, унăн чунĕ пирĕн комсомол пулса тăрат.

Советсен çĕршывĕнчи çамрăк çынсем ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă куна аннемĕр-тăван çĕршыв валљи хатĕрленĕ мухтавлă парнесемпе кĕтсе илчĕр.

(„Правда“ умсăтăн, ийулĕн 14-мĕш).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Агитатăрсен суйлав хыççăнхи ĕçĕсем

Çыхăну çуртĕнчи пуçламĕш парторганизаци отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн партилĕ-политикăлă ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Ку ĕçĕн резуљтачĕ суйлав вăхăтĕнче лайăх палăрчĕ. Шупашкарти çыхăну ĕçĕнче ĕçлекенсем хăйсен политикăлă тата производствăлă активлăхне суйлав вăхăтĕнче телеграф, телефон, радио тата почтă пĕр чарăнмасăр ĕçленипе кăтартрĕç.

Çыхăну çуртĕнче 14 полит кружок ĕçлет. Унта 310 çын вĕренет. Вĕсем кулленхи политикăлă ыйтусене вĕренеççĕ. Кунсăр пуçне тата тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене, капиталисла çĕршывсен разведкисен, вĕсен троцкисла-бухаринла агенчĕсен ĕç метăчĕсем çинчен, социализм строительствинчи çитĕнӳсем çинчен тата ытти ыйтусем тăрăх та лекцисем, калаçусем туса ирттернĕ. Епĕр çавăн пекех РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совет суйлавĕсен итогĕсене, Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займ çинчен пухусенче питĕ активлă сӳтсе-йăвнă.

Суйлав вăхăтĕнче пирĕн агитколлектив 21 çынтан 32 çынна çитиччен ӳсрĕ. Пирĕн агитатăрсем 5 суйлав участкинче активлă ĕçлесе 110 çынна вĕрентрĕç. Агитатăрсенчен уйрăмах Петров коммунист, Тимофейĕв комсомолец, Шипуновпа Васильĕв сочувствуйушчисем, Волкăв (партире тăман активист) йулташсем лайăх ĕçлерĕç. Политикăлă агитаци ĕçне суйлав хыççăн та сӳнтерсе лартман епĕр, ăна лайăхлатма тăрăшатпăр. Шипунов агитатăр Свердлов йачĕпе тăракан урамри килхуçи хĕрарăмĕсемпе пуху туса, вĕсене Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займ çинчен каласа ăнлантарнă. Килхуçи хĕрарăмсем çав пухурах 600 тенкĕлĕх займ илме çырăннă. Хамăр коллективра та çĕнĕ займа икĕ кун хушшинче сарса пĕтертĕмĕр.

Суйлав вăхăтĕнче парторганизаци суйлав умĕнхи пухусене тата митингсене 5 хут ирттернĕ, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама тăратнă кандидатсене чĕнсе пухусем ирттервĕ. Ку пухусене 2 пин çынна йавăçтарнă. Пухусем питĕ пысăк активлă ирттрĕç. Суйлав кампанийĕ пирĕн организацинче çĕнĕ çынсем ӳссе çитĕннине кăтартрĕ. Пирĕн коллективран округри тата участкăри суйлав комиççи членĕсем пулса 7 çын, доверĕннăйсем 11 çын ĕçленĕ. Суйлав вăхăтĕнче активлă ĕçленĕ Сучковă доверĕннăйа парторганизаци ответлă ĕçе лартма хатĕрлет.

Суйлав вăхăтĕнче производствăра активлă ĕçлекенсене 59 çынна премиленĕ. Çапла вара пирĕн коллективра стахановецсен, ударниксен шучĕ татах ӳсрĕ. Чи лайăх стахановецсене—9 çынна çыхăну маçтăрĕ йатне пама сĕннĕ. Вăл шутра Котов йулташ. 42 çул хушши почтаљйон пулса ĕçлет. Вăл производствăра та, обшчĕствăлă ĕçре те пример кăтартаť. Телеграфри комсомолецсемпе çамрăксен бригади (бригадирĕ Лебедев йулташ) пĕр браксăр ĕçлесе, хăйĕн нормине 165 процент тултарса пыраť. Лебедев йулташ участкăри суйлав комиççи членĕ пулса ĕçленĕ. Хаљ вăл çыхăну халăх комиссарĕ Берман йулташ чĕннипе Пĕтĕм Союзри стахановецсен канашлăвне кайнă. Хулари телефон станцинче ĕçлекен Степанăвă йулташ хăйĕн нормине ытлашшипех тултарса пыраť, 20 çул хушши телефонисткă пулса ĕçлет. Агейĕвă работницă 10 çул хушши почтаљйон пулса ĕçлет. Вăл та суйлав вăхăтĕнче участкăри суйлав комиççи членĕ пулса ĕçленĕ. Иванова, Хилова, Андрийанăвă, Анисимăв йулташсем те çавăн пекех лайăх, активлă ĕçлеççĕ.

Суйлав вăхăтĕнче политикăлă агитаци ĕçне епĕр лайăх йĕркелесе йатăмăр. Çак ĕçе, унăн пахалăхне малашне татах лайăхлатса йарасси, стахановла йухăма тата социализмлă ăмăртăва сарса йарасси, производствăри дисциплинăна хăпартасси, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтересси—парторганизацин задачĕ пулса тăраť. Çак задачăсене пурнăçланипе пирĕн парторганизаци çыхăну ĕçне республикăре малти вырăна кăларма тăрăшаť.

Партком çекретарĕ Петров.

Хавасłăн кĕтсе илетпĕр

Епĕр, Аслă Чакри (Вăрмар районĕ) Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе комсомолкăсем, комсомол 20 çул тултарнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленетпĕр. Хаљ епĕр Мускаври автосавăтра ĕçлекен çамрăк рабочисем чĕнсе каланине сӳтсе-йавса, хамăр çине çакăн пек обйазательствăсем илтĕмĕр:

Колхозра хастарлăн ĕçлесе, ĕçре пысăк çитĕнӳсем тумала. Ĕç нормисене кулленех 120—150 процент ытла тултарса пырса, комсомол 20 çул тултарнă йубилейе саванăçлăн кĕтсе илетпĕр.

Халĕ пирĕн Чăваш республикинче пысăк та çĕнĕ савăтсем, тăвасçĕ. Çакăнта ĕçлеме епĕр комсомолецсенчен 5 çынна йаратпăр.

Пирĕн колхозра хастарлăн ĕçлекен çамрăксем нумай, вĕсен хушшинче политвоспитани ĕçне тивĕçлипе организацилесе, комсомол ретне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлетпĕр. Активлă та примерлă ĕçлесе пыракан комсомолецсене (виçĕ çынна) парти ретне пама хатĕрлетпĕр.

Тырпула хиртен пуçтарса кĕнĕ вăхăтра колхозниксен хушшинче культмассăлă ĕçе татах та вăйлатса йаратпăр.

Комсомол комитечĕн çекретарĕ В. Андрийанăв.

Шкул çурчĕсене хăвăртрах йусамала

ЙĔТĔРНЕ. Сарйаленчи туллимар вăтам шкул 1938—39 вĕренӳ çулне пур йенчен те хатĕрленсе çитрĕ. Шкул çуртне, кăмакисене, партăсемпе сĕтел-пукансене, класнăй доскасене йусанă, сăрламалисене сăрланă. Вĕренӳре кирлĕ йапаласене: учебниксем, хут-кăранташ т. ыт. çителĕклĕ хатĕрленĕ. Шкул директăрĕ Железнов йулташ пур ĕçе те тĕплĕн, йĕркелĕн туса пыраť, мĕншĕн тесен вăл, вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленни пĕтĕм вĕренӳ ĕçĕн пахалăхне татса парассине лайăх ăнланнă.

Анчах районра кун пек паха тĕслĕхсем тата тупма хĕнтерех. Районти çутĕç пайĕпе йунашар тенĕ пек ларакан хулари вăтам шкул вĕренӳ çулне чăтма çук йапăх хатĕрленет. Шкул çуртне йусамала, стенасене, урайсене сăрламала, кăмакисене йусаса шуратмала. Анчах ку ĕçсенчен халĕ нимĕн те туман. Класнăй доскасем çĕмрĕк—йусамаççĕ. 5 доска çитмест—туйанмаççĕ. Доскасене пĕлтĕрхи пек класран класа куçарса çӳрес теççĕ пулас шкул дирекцийĕнчисем. Çавнашкалах хут, кăранташсем, учебниксем, вĕренӳре кирлĕ ытти пособисем хатĕрлемен-ха. Учительсем вĕренӳ çулĕ пĕтнĕренпе Йĕтĕрне хулинчех пурăнаççĕ. Апла пулин те шкул директăрĕ Горшенин йулташ кĕркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевне тăмали ачасемпе ĕçлеме учительсене йавăçтарман. Перезачотниксен йышĕ сахал мар—95 çын. Вĕсенчен нумайĕшĕн тĕрĕслеве 2—3 предметпа тăмала.

Сĕнтĕрти пуçламĕш шкулта та вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Шкул директăрĕ Куликовă иртнĕ çулхи йăнăшсене маннă пулмала. Пĕлтĕрхи вĕренӳ çулне начар хатĕрленсе кĕнине пула, шкул пысăк йавăрлăхсем тӳссе ирттерчĕ.

Районри чылай шкулсенче партăсем çитмеççĕ. Акă Тури-Мучарти пуçламĕш шкулта 24 партă, Иаровойкасси шкулĕнче 15 партă çитмест. Кăташри пуçламĕш шкул заведуйушчийĕ Д. Шуверĕв вĕренӳ çулĕ пĕтнĕ хыççăн шкул алăкне çăрапа питĕрсе хăварнă та, урăх пырса та пăхман.

Районри пĕр шкулта та вутă хатĕрлеме тытăнман. Сăмахран, Йаровойкасси шкулĕн 215 кубла метр вутă хатĕрлемеле. Хаљ çанталăк вĕри, тен савăнпа пулĕ шкул директăрĕ Чернов йулташ вутă çинчен пачах та аса илмест.

Шкул ачисем çулахи каникула чылай çĕрте усăсăр ирттереççĕ. Колхозсенчи комсомол организацисем, ПСÇЛКС райкомĕ, районри физкультурă организацийĕсем ачасен çулахи канăвне йĕркелес ĕçрен айăккала пăрăнса тăнă.

Йулашкинчен çутĕç пайĕ пирки çирĕп сăмах каласа хăвармала. Вăл çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе йĕртсе пымасť, шкулсене татăклă кăтартусемпе пулăшусем памасť. Çакна Палтайри вăтам шкул çуртне темиçе çул хушши туни те лайăх кăтартаť.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе тĕпренех вăйлатмала, кунта пĕтĕм ĕççыннисене хутшăнтармала.

Ник. Цветков.

Шкул çурчĕсене йусарĕç

ÇĔРПӲ. Кăшаркасси йалсоветĕнче виçĕ шкул: иккĕшĕ—туллимар вăтам шкулсем, тепри—вăтам шкул. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май, шкулсенче виçĕ кăмака, 15 партă йусарĕç, çĕнĕрен 8 партă, 9 доска туса вĕсене сăрларĕç. Вĕренекен ачасем валљи 300 тенкĕлĕх кăранташсем, ручкăсем, перосем, хутсем илсе хунă. Шкулсен хутмали вутă та çителĕклĕ.

А. И.

Китайри Коммунистсен партин паллă деятелĕсем: Мао Цзе-дун (сулахайри) тата Чжу Де (сылтăмра) хăйсем йĕртсе пыракан çарăн штабĕнче.

(Союзфото).

Çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленер

ЙĔЛЧĔК. Тăрмашри туллимар вăтам шкул 1937—38 вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче шкула çӳресси 98,2 процент, ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси 96,9 процент пулчĕ.

Ачасене коммунисла воспитани парас ĕç те иртнĕ çулта чылай вăйланчĕ. Шкулта кĕркуннерен пуçласа вĕçне çитиччен 6 политкружок ĕçлерĕ, ирхине занятисем пуçланиччен йаланах политинформацисем пулса пычĕç.

Шкулти пуçламĕш комсомол организаци çирĕпленчĕ. Çак иртнĕ çулта пионертан комсомола 9 ача куçарнă. Пионер организацине 19 ача çĕнĕрен илнĕ.

Шкулти комсомол тата пионер организацисем çумĕнче икĕ ерне пĕрре стена хаçачĕсем туха пычĕç. Кунсăр пуçне звеносем 16 тĕрлĕ листовкăсем 10 кунта пĕрре кăларса тăчĕç. Стена хаçачĕсемпе листовкăсем вĕренӳ пахалăхне хăпартма, ачасен дисциплинине çирĕплетме нумай пулăшрĕç.

Пĕлӳ пахалăхне хăпартас ĕçре ачасен сывлăхĕ пысăк вырăн йышăнса тăраť. Шкулта иртнĕ çулсенче трахом вăйлă сарăлнă, çавна пула нумай ачасем вĕренӳре кайа йулса пынă. Шкул коллективĕ ку инкеке пĕтерессишĕн çине тăрса ĕçлерĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланнă чух шкулта трахомлисем 33 процента йахăн пулнă пулсан, халĕ вĕсем 15 процента çити чакнă.

Шкул халĕ 1938—39 вĕренӳ çулне кĕтсе илме хĕрсех хатĕрленет. Пĕрремĕш класа çĕнĕрен 23 ача илнĕ, кĕркуннерен шкулта пурĕ 223 ача пулаť. Вĕсене вырнаçтарма шкул çуртне, шкулти вĕренӳ хатĕрĕсене, партăсене, сĕтел-тенкелсене тĕплĕн хатĕрленĕ. Кăмакисене пăсса çĕнĕрен çавăрнă, чӳречесене йусанă. Портрет рамĕсем 22 хатĕрленĕ. Вутă турттарма договăрсем туна. „Новый путь" колхоз договăр тăрăх ĕçлеме тытăнчĕ.

Учительсем çителĕклĕ, 3 учитель курса тата заочнă вĕренме кайнă. Анчах çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçре чăрмавсем те сахал мар-ха. Пысăк чăрмав—шкулăн укçа-тенкĕ çукки. Кăçалхи бюджетпа шкул 14850 тăнкĕ расхутлама палăртнă, иртнĕ 6 уйăх хушшинче 5 800 тенкĕ илсе усă курнă. Районти финанс пайĕ халĕ ĕнтĕ шкула укçа памасăр тăраť. Каламала, кун пек чăрмав пĕрремĕш çул мар пулса пыраť. Халăха çутта кăларас ĕç валљи уйăрнă укçа-тенкĕ усă курмасăр çулсеренех нумай йулаť. Пирĕн шкул хăйĕн бюджет укçинчен 1936 çулта 1628 тенкĕ, 1937 çулта 2700 тенкĕ илсе çитерейменсĕр йулнă.

Районри финанс пайĕ кăçал та çавнашкалах тăвасшăн пулмала.

Халĕ пирĕн кабинетсене приборсемпе кĕнекесем илсе пуйанлатмала, анчах кăна тума укçа çук. Районра чылай шкулсем çакăн пек укçа çуккипе чи кирлĕ йапаласене илеймесĕр тăраççĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе районри çутĕç пайĕ начар йĕртсе пыраť, кунти çынсем „çулахи настроенине" парăннă.

Ф. Б.

Районри çутĕç пайĕ çухалнă çĕрте

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Илйинкăри вăтам шкулăн директăрĕсемпе ĕç ăнмарĕ. Халĕ ĕнтĕ ку шкулта директăр вырăнне виççĕмĕш çын йышăнса лараť (вăл та йе пайан, йе ыран тухса кайатăп, тесе çӳрет).

Кĕркунне, вĕренӳ çулĕ пуçланнă чухне, кунта директăрта Павловский пулнă. Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчи çынсем ун çинчен:

— Лайăх мужик, маттур хуçайственник...—тетчĕç.

Анчах вăл ун пек çын пулман: 1927 çулччен Тутар республикинче пуп пулса ĕçлевĕ, Илйинкăри шкулта чăн-чăн сăтăрçă пек ĕçлесе пынă. Шкула йăлтах йапăхтарса йанă. Вĕренекенсем хушшинчи дисциплинăна пăсса пĕтернĕ. (Хăшпĕр ученикĕсене утă вăрлама вĕрентнĕ). Учительсемпе пĕрле шавлă ĕçкĕ-çикĕ туса пурăннă.

Павловскийĕн хăшпĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларсан, Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе Тутаркас районĕнчи çутĕç пайĕ директăра И. Йерусланăва лартрĕç. Йерусланăв шкула прорывран кăларас тĕлĕшпе пĕрре те ĕçлемерĕ, ĕçлеме те шутламарĕ. Директăр вырăнĕнче вăл укçашăн кăна ларчĕ. Вăл хăйĕн çитменлĕхĕсем çинчен пухусенче тухса каланă учительсене хĕсĕрлеме тытăнчĕ. Йулашкинчен вара учительсен пĕтĕм коллективне хирĕç кайакан пулчĕ.

— Приказываю!

—Лишаю зарплаты!

— Что вы пузыритесь!..—çакнашкал метăдпа ĕçлерĕ вăл.

Апрелĕн пуçламĕшĕнче çĕнĕ директăр Л. И. Чалошкин килчĕ. Анчах ĕç улшăнчĕ-и-ха? Вĕренӳ çулне пĕтеркелерĕç. Резуљтатсем аптăрасах каймаççĕ: мĕнле пулсан та, учительсем хăйсен ĕçне турĕç-турĕçех.

Калас пулаť, Чалошкин та Йерусланăв метăчĕпех ĕçлет. Учительсем çине самодурла пăхасси çаплах пĕтмерĕ.

Хăшпĕр учительсем тĕрлĕ сăлтавсемпе кĕркунне урăх çĕре куçмала. Вĕсене, çулахи отпускăсем парсанах, хватерсенчен хăвалама тытăнчĕç, Илйинкă йалсовет председательĕпе директăр çичĕ кунлăх кăна çук пачĕç.

— В противном случае будете...—çакăн пек вĕсен „саккунĕ".

Кунăн сăлтавĕсене пĕлме йăвăрах мар. Илйинкăна тĕрлĕ хуласенчен дачниксем канма киле пуçларĕç. Учительсене хĕссе кăларсан, вĕсем валљи вырăн пулаť тата шкулăн укçа пулаť.

Тĕрĕссипе каласан, хватерĕсем хватер майлă мар—пĕтĕмпех йăпăхса кайнă.

— Районри çутĕç пайĕ мĕн тăваť?—тейĕçĕ хăшĕсем. Тӳррипе каласан, Тутаркас районĕнче вăл пурри пачах та сисĕнмест.

Мусс.

Марксизмăн пысăк та паллă произведенийĕсем

Ф. Константинăв

1921 çулта Ленин çапла çырнă: „...Плехановăн философи çинчен мĕн çырнине пĕтĕмĕшпех вĕренмесĕр —именнă вĕренмесĕр — ăнланула, чăн-чăн коммунис пулма çук, мĕншĕн тесессĕн вăл çырнисем—марксизмăн пĕтĕм тĕнчери литературинче чи лайăххи". Плехановăн философи çинчен çырнă статйисем, тесе хушса каланă Ленин, „коммунизма вĕренес ĕçре обйазательнăй йĕркепе усă курмали учебниксен çерине кĕме тивĕç".

Ленин çакăн пек хакланă пуринчен малтан Плехановăн 1903 çулччен çырнă философилĕ произведенийĕсене тивет, урăхла каласан, Плеханов револьуцилĕ марксист пулнă тапхăрта, вăл реакцилĕ народничествăна хирĕç, ревизионизсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешнĕ тапхăрта çырнă произведенисене тивет.

Плехановăн нумайах пулмасť-ха Гослитиздат кăларнă сочиненийĕсем—„К вопросу о развитии монистического взгляда на историю", „О материалистическом понимании истории", „К вопросу о роли личности в истории" йатлă произведенийĕсем—шăпах ĕнтĕ Плеханов ĕçĕн чи лайăх тапхăрĕнче çырнăскерсем. Вăл произведенисене хĕрĕх çул ĕлĕкрех çырнă пулсан та, вĕсем хаљ те-ха хăйсен хакне çухатман, вĕсем марксизма вĕренмели калама çук паха пособисем пулса тăраççĕ.

Марксизмăн тăшманла, наукăна хирĕçле реакцилĕ теорисене тата пуринчен те малтан народниксен реакцилĕ утопилĕ шухăшĕ вĕрентĕвĕсене критиклесе, Плеханов марксизм обшчĕствăлă аталану саккунĕсем çинчен вĕрентнине чĕрĕ, ăнланмала та усă, ĕнентерӳлĕ формăпа каласа ăнлантарса параť. Пит те пуйан историлĕ материал çине, обшчĕствăлă пурнăçăн тĕрлĕ облаçĕнчи темĕн чухлĕ фактсем çине тĕренсе, Плеханов Марксăн историлĕ теорийĕ чăн-чăн тĕрĕс иккенне, вăл пĕртен-пĕр ăслăлăхла теори пулса тăнине кăтартса, ĕнентерсе параť.

Марксизм умĕн пулнă философилĕ, социологилĕ шухăш мĕнле аталанса ӳссе пынине Плеханов утăм хыççăн утăмпа сăнаса, йĕрлесе тухаť. Вăл çав шухăш аталанса, муталанса тăвă хирĕçӳлĕхсене (противоречисене) шыраса тупса çийеле кăлараť, марксисла обшчĕствăлă теори етемлĕхĕн инçене, историйĕ тăрса йулнисене çеç мар, унăн пайан кунхисене çеç мар, тата вăл етемлĕхĕн малашне пулмалине те, пролетариатăн социализмлă револьуцийĕ пулмаллах иккенне, йепле пулсан та капитализм пĕтмелех тата коммунизм çĕнтермеллех иккенне мĕн тери тĕлĕнмеле уççăн çутатса панине кăтартса параť.

Обшчĕствăлă аталану вăл—йĕпле пулсан та пулма тивĕçлĕ, саккунлă йĕркĕпе пулса пыракан процесс пулса тăраť, вăл хăш йенне аталанса пырасси çынсен кăмăленчен килмест, тесе ăнлантараť историлĕ материализм.

Франциири просветительсем (сутта кăларакансем), сăмахран, истори, обшчĕствăлă пурнăçăн пĕтĕм вăрттăнлăхĕ етем природинчен килет, тесе ăнлантарнă. Вĕсем: пĕр обшчĕствăлă йĕркесем (сăмахран, феодализм) етем природипе килĕшеççĕ, теприсем килĕшмеççĕ, тенĕ. А етем природине мыслительсем тĕрлĕрен ăнланнă. Франциири буржуалă револьуци çĕмĕрсе тăкнă хыççăн феодализм йĕрки вырăнне çĕнĕ, буржуалă йĕркесем тухса тăрсассăн, обшчĕствăлă пурнăçри кивĕ хирĕçӳлĕхсем вырăнне çĕнĕ, капитализмлă хирĕçӳлĕхсем тухса тарсассăн, социалис-утописсем пĕтĕм капитализмлă обшчĕствă стройне, вăл—етем природине хирĕçлекен строй, тесе каланă. Франциири просветительсен шухăшĕсене илсессĕн, çапла каланă: вĕсем етем природине тĕрĕс ăнланман, тенĕ.

„Маркс вĕрентĕвĕ ку ĕçе йăлтах тепĕр май çавăрса йачĕ: хăй пурнăçне малалла тăсасшăн пулса çын çутçанталăка, унăн тулашĕнчен хăйне май туртаť,—тенĕ Плеханов,— çав вăхăтра вăл хăйĕн природине улăштараť. Çапла вара, историлĕ аталанăва ăнлантарса парас ĕçе тепĕр вĕçрен тытăнмала: çын тулашри çут çанталăк çине производительнăй воздействи парас процесс мĕнле майпа пулса пынине тĕпчесе пĕлес пулаť. Ăслăлăхшăн аслă паха ĕç пулса тăнине кура ку открытине Коперник открытийĕпе пĕр рете тата пĕтĕмĕшпе пĕтĕм аслă, пысăк усă кӳрекен открытисемпе пĕр рете лартма пулаť". („К вопросу о развитии монистического взгляда на историю", стр. 103. Издание 1935 г.).

Обшчĕствăлă аталану—пулса пыма кирлĕ, саккунлă йĕркепе пулса пыракан, çынсен ирĕкĕпе кăмăлне пăхăнса тăман процесс, тесе ăнлантарса пачĕ марксизм. Обшчĕствăлă прогресс никĕсĕнче материаллă производительнăй вăйсем выртаççĕ. Çынсен обшчĕствăлă пурнăçĕн пĕтĕм стройĕ, çутçанталăк çынсен влаçнĕ мĕн тери пăхăнса тăни, вĕсем производствă процесĕнче пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнса тăни, çынсем классем çине пайланасси, вĕçне çитийĕх шутласан, çав вăйсем мĕн тери вăйлăн аталанса кайнинчен килет. Производительнăй вăйсем начар аталаннă чух, уйрăм çын хăйне пурăнма кирлĕ йапаласене те аран-аран çеç тупма пултарнă чухне, обшчĕствă аталанăвĕн çакăн пек пусăмĕнче експлоатаци те, чуралăх та пулма пултараймаň.

Хаљхи вăхăтра производительнăй вăйсен аталанăвĕ классем пулнипе пĕр çĕрте шăнăçса тăма пултараймасť, буржуази класĕ пулнипе пĕр çĕрте шăнăçса тăма пултараймасť. Çак ĕнтĕ çынсен ăнланувĕнче те палăраť. Пĕр-пĕр обшчĕствăлă строй тӳрĕлĕхлĕ мар иккенне ăнланасси çуралса тухсассăн, ку вара çав обшчĕствă пурнăçĕ вĕçнеле суланса пынине, унăн никĕсĕнче хирĕçӳлĕхсем— прогрессивлă классене çав ĕмĕрĕ иртнĕ обшчĕствăлă йĕркене хирĕç кĕрешме тĕкекен хирĕçӳлĕхсем çуралса тухнине пĕлтерет.

Çынсен обшчĕствăлă ăнланувĕн формисем, шухăшсемпе туйăмсем мĕнле пулни, йăласем, ăслăлăх, философи, искусствă, тĕн мĕнле пулни, çынсен материаллă пурнăçĕн условийĕсем мĕнле пулнинчен тухса тăраççĕ. Обшчĕствăлă пурнăç мĕнле пуласси çынсен обшчĕствăлă ăнланувĕнчен килет, тесе шухăшлавă Маркечен социологсем; вăл апла мар, йăлтах урăхла, обшчĕствăлă пурнăç мĕнле пулнинчен обшчĕствăлă ăнлану мĕнле пуласси тухса тăраť.

Иртнĕ çĕр çул вĕçĕ тĕлнеле Российăра производительнăй вăйсен аталанăвĕ капитализм производствăри феодалла отношенисене çĕнтересси патне илсе çитервĕ, капитализмпа пĕрле вара пролетариат çуралса ӳсвĕ, çапла пулни ĕнтĕ çак çĕнĕ клас массисем хушшинче марксисла идейăсене анлăн сарма никĕс туса панă. Реакцилĕ народниксем патша ценсурипе пĕр пулса, марксизм идейисене хирĕç кĕрешес ĕçре темĕн чухлĕ вăй хунă пулсан та, ăна массăсем хушшинче сарăлмашкăн нимĕн те чарса тăма пултарайман. Çавăнпа пĕрлех народниксен шухăшĕ — вĕрентĕвĕ утопилĕ тата реакцилĕ иккене пурнăç тăрă шыв çине кăларса пынă.

Епĕр пăхса тухакан произведенисенче Плеханов та народниксен идейисем кирек мĕнле пулсан та аçканса анмалăх пулни çинчен калаť. Вăл каласа хунисем тĕрĕс пулнине, тата пуринчен те малтан, вăл народниксене хирĕç кĕрешсе хӳтĕлесе тăнă идейăсем тĕрĕс пулнине пурнăç çирĕплетсе пачĕ.

Народничествăна хирĕç пынă кĕрешӳре Плехановă калама çук пысăк чыс тивет. Вăл ăна татăклăнах çапа-çапа хуçнă.

Епĕр пăхса тухакан сочиненисенче Плеханов критиклекен реакцилĕ теорисенчен пĕри вăл,—геройсем тата ушкăн çинчен калакан теори, ăна народниксем сарнă пулнă. Народниксем: историйĕ малала тĕксе хускатса пыракан тĕп вăй вăл—герой, критикăлă шухăшлакан çын, çулпуçĕ пулаť, тесе шутланă. Народниксен куçĕпе пăхас пулсассăн, массă, халăх вăл —ушкăн, вăл хăй тĕлĕн историлĕ творчествăлă ĕç тума пултараймасť.

„К вопросу о развитии монистического взгляда на историю" йатлă кĕнекере Плеханов çапла çырнă: „ушкăна хамăр ăçта илсе кайас тенĕ çавăнта илсе каймашкăн, унтан хамăр, пылчăкран çыпăçтарса тунă пек, мĕн шухăшлаť çавна тумашкăн пирĕн хамăр пуçсене кăна çутта кăларма кирлĕ тесе сĕмленекен „геройсем" пур чухнех ха, — ăсхакăл патшалăхĕ илемлĕ сăмах кăна, ырă шухăшлă ĕмĕт кăна пулса тăраť. Историлĕ ĕçĕн геройĕ „ушкăн" хăй пулса тăрсан тата çав тĕссĕр „ушкăнта" çав ĕçе тивĕçлĕ ăнланулăх аталанса çитĕнсен кăна вăл пирĕн пата çичĕ çĕр миллĕ утăмсемпе сывхарса килме пуçлĕ. Çынсен ăнлануне аталантарса çитĕнтерĕр,—тенĕччĕ епĕр. Производительсем (урăхла каласан, пролетариат, —Ф. К.) хăйсене хăйсем ăнланса илессине аталантарса çитĕнтерĕр,— тесе хушса калатпăр епĕр хаљ. Субйективлă философи, ушкăнпа геройа хире-хирĕç тăратса, ушкăн вăл—нуљсен ушкăнĕ кăна, вĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăрасси пуçа тăракан геройăн идеализмĕнчен кăна килет, тесе сĕмлесе шухăшласа, çав ăнлануа аталантарса ӳстерме пулăшас ĕçре интеллигенцие чăрмантарса тăраť, —шăпах çавăнпа ĕнтĕ вăл пире сийенлĕ пек курăнаť. (стр 147—148).

Иртнĕ çĕрçулăн 90-мĕш çулĕсенче Плеханов пĕтерсе лартмалах критиклесе тăкнă народниксен реакцилĕ идейисене пайан ĕнтĕ пирĕн вăхăтри чи реакцилĕ вăй—фашизм — пĕтĕм прогрессивлă етемлĕхĕн чи усал тăшманĕ йарса илчĕ. Геройсемпе ушкăн теорине Плеханов критиклени çавăнпа та ĕнтĕ историре кăна мар, пайаçхи пурнăçра та политикăлă пысăк вырăн йышăнса тăраť.

Плеханов хăйĕн „К вопросу о развитии монистического взгляда на историю" йатлă ĕçĕнче тата уйрăмăнах „К вопросу о роли личности в истории" йатлă ĕçĕнче

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Хăйула та паттăр љотчиксене саламлани

Коккинаки тата Брйандинский йулташсене

ПСК(б)П Мускав облăç комитечĕпе хула комитечĕ, есĕр Мускав—Хабаровск—Владивосток районĕ маршрут тăрăх пулнă геройла вĕçеве ăнăçлăн пурнăça кĕртнĕ майпа, сире Мускаври тата Мускав облăçĕнчи бољшевиксемпе пĕтĕм ĕççыннисен йачĕпе хĕрӳлĕн саламлат.

Сирĕн чаплă, социалисăмлă тăван çĕршывăн мухтавĕпе хăватне тата тепĕр хут ӳстернĕ çĕнтерӳпе мухтанатпăр.

Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ пăхса ӳстернĕ хăйулă та паттăр совет љотчикĕсене—салам.

ПСК(б)П Мускав облăç комитечĕпе хула комитечĕ.

Хăйулă та паттăр совет патриочĕсен çĕнтерĕвĕ

Сталинла саманан мухтавлă соколĕсене—Коккинакипе Брйавдинский йулташсене хĕрӳлĕн саламлатăп.

Сирĕн вĕçĕв—паттăр та хăйулă Совет патриочĕсен çĕнтерĕвĕ, çĕнĕ конструктăр вăйĕсемпе, производствăн çĕнĕ метăчĕсемпе тунă самољот-чаçĕсен çĕнтерĕвĕ.

Ку çĕнтерĕве пирĕн çĕршыв аслă сталинла пилĕкçуллăхсене çитĕнӳлĕн пурнăça кĕртнипе турĕ.

Сирĕн аллăрсене хытă чăмăртатăп.

ССР Сойузĕн Оборонă промышлĕннăç Халăх Комиссарĕ.

М. КАГАНОВИЧ.

Пуйăссене, Коккинаки самољотсем çӳретнĕ пек, çӳретĕпĕр

Халиччен пулман вĕçевре таврăнакан калама çук чаплă совет љотчик геройне—салам. Епĕ, ватă машинис, паровоз регуљатăрне тытса пыма вĕреннĕскер, хăйĕн самољотне вĕçĕ-хĕррисĕр анлă тăван çĕршыв çийĕпе çав тери тĕрĕс, аварисĕр тата хăвăрт вĕçтерсе илсе тухнă Владимир Коккинаки талантне пысăк вырăна хурса хаклатăп. Пирĕн, чукунçул работникĕсен, хамăр ĕçре транспăртра çавăн пек рекордсем тăвас пулат. Йавăр пуйăссене пысăк хăвăртлăхпа тата инçене çуретĕпĕр.

Санăн таса, вăйлă аллуна хытă чăмăртатăп, Коккинаки йулташ, хĕрлĕ столицăна мухтавлăн таврăннă майпа сана саламлатăп.

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ.

А. М. СЕДОВ.

Çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвасса шанатăп

Геройла вĕçев ăнăçлăн пулса иртнĕ майпа хăйулă љотчиксене, социалисăмлă тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсене сывлăх сунса саламлатăп. Совет авиаци çĕнтерĕвĕсен кĕнеки çине сирĕн вĕçев çĕнĕ страницă çырса хучĕ. Тăван çĕршывăн лайăх, вĕрçĕнĕ техникипе аварланнă пирĕн мухтавлă љотчиксем тата пысăкрах тĕлĕнмеле чаплă ĕçсем туса кăтартĕç. Владимир Коккинаки хăйĕн хăйулă штурмăнĕпе А. Брйандинскийпе пĕрле татах çĕнĕ чаплă вĕçевсем тăвасса шанса тăратăп.

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, Урал çар округĕн çар совет членĕ.

Т. Л. НИКОЛАЙĔВ.

Финљанди самољочĕ совет чикки урлă каçса вĕçнĕ

ЛЕНИНГРАД, ийулĕн 15-мĕш. 1938 çулхи ийулĕн 9-мĕшĕнче Финљандин пĕр моторлă самољочĕ ССР Сойузĕн государствă чиккине пысăккăн пăснă.

Самољот чикĕри 699-мĕш йупа районĕнчи чикĕ урлă вĕçсе каçса шалала 45 километр кĕнĕ те, Карел АССР территори çинче чикĕ тăрăх 85 километр вĕçнĕ, çакăн хыççăн вара самољот Финљандине вĕçсе кайса курăнми пулнă.

ССР Сойузĕн Финљандири полномочнăй представителне Финљанди правительствине протест пама хушнă. (ТАСС).

Çулйĕр участкисенче

Малта пыракан колхоз. Марат йалсоветĕнчи „Красный восток“ колхоз (Йĕпреç р.) кăçалхи çул çулйĕр строительстви планне районти ытти колхозсенчен малтан тултарчĕ. Колхозăн план тăрăх Патăрйелпе Йĕпреç çулĕ çине 50 метр тăршшĕ шашкă сармала пулнă пулсан, вăл ĕçе ытлашшипех турĕ.

Г. Марушĕв.

Хăйăр сараççĕ. Тугачри Партин XVI-мĕш сйесĕ йачĕпе тăракан колхоз членĕсем (Елĕк р.) тырă вырма тухиччен колхоза çирĕплетсе панă çулйĕр участкисене йусарĕç. Халĕ вĕсен çулĕсем лайăх. Çак йулашки кунсенче тата виçĕ километр тăршшĕ çул çине 68 кубла метр хăйăр сарчĕç.

Г. Андрейĕв. Д. Матвейĕв.

В. Деферан

КАВКАЗРА

Кунта чăваш çĕршывĕнчен еп килтĕм.
Абхазине еп килтĕм хăнана.
Тăван Кавказ! Анне пек кĕтсе илтĕн,
Хĕвел-пек чыслăх кӳтĕн ес мана.

Тинĕс хайар шавне кунта еп илтрĕм.
Пĕлĕт çӳлли тусем куç умĕнче.
Вĕсенĕн йӳрлă тӳпине те çитрĕм.
Çуралчĕ йуррăм ман вĕсем çинче.

Шăранчĕ сăввăм ман, хĕвеллĕ кăнтăр,
Ес ирĕклĕн чечекленни çинчен.

Мускав çинче йалкăшакан çут çăлтăр
Кунта кашни чечекĕн сăнĕнче.

Грузин, абхаз—епир пĕр телейле,
Пур халăхсем те туслă, пĕр çемйе.
Çĕршывăма лăпкат телей хĕвеле,
Тав Сталина, чи аслă етеме!

Вăл пачĕ çутă та телейлĕ ĕмĕр,—
Вĕрентрĕ уншăн кĕрешме пире.
Мухтав çулпуç, мухтав тăван аттемĕр,
Мухтав хавасла çĕнĕ ĕмĕр!

Кавказ, Хура тинĕс хĕрри.

УЙРА

Хумсем йăванса пĕр-пĕрин хыçĕнчен
Тӳлеккĕн йухаççĕ инçе те инçе.
Чупса та çитеймĕн, куçпа та виçеймĕн,
Пыратăп пăхса чунăмпа киллелсе.

Шултра хăмăлсем çийĕнче пучахсем,
Туллин тăранса пучахри пĕрчĕсем

Ыран виçмине вырмана чĕнме хатĕр,
Лараççĕ илемлĕн, сĕтеклĕн пиçсе.

Пиçет çĕн ыраш, ылттăн пĕрчĕ тулат,
Кашни пĕрчийех пирĕн пурлăх пулат.
Тăшман та илеймĕ, çĕре те тăкмастпăр,
Пухса кĕме хатĕр колхоз тырпула.

И. Малгай.

КĔСКЕН

◆◆ Çĕнĕ пӳртсем лартаççĕ. Йенĕшри (Шăхасан районĕ) Максим Горький йачĕле тăракан колхоз членĕсем çулсеренех çĕнĕ пӳртсем нумай лартаççĕ. Кăçал та Никифăр Федăрăвпа Никантăр Иванов колхозниксем çĕнĕ пӳртсем лартрĕç.

Г. Шашков.

◆◆ Грузовик туйанчĕç. Тойкилт йалсоветĕнчи (Тутаркас р.) „Динамо“ колхоз çĕнĕ клуб туса çитерет. Çав йалсоветрах Тељмăн йачĕпе тăракан колхоз тата Турай йалсоветĕнчи „Урожай“ колхоз государствăна аш-какай сутса грузовик туйанчĕç.

Г. Федотăв.

◆◆ Пĕве. Вăтакас Кипечри (Шăхасан районĕ) „Память Ильича“ колхоз çĕнĕ пĕве пĕвелерĕ. Пĕве тунă çĕре 2 пин ĕçкунĕ тухрĕ.

С. Йефимăв.

◆◆ Икĕ кĕпер. Аслă Ăтакассинчи (Сĕнтĕрвăрри районĕ) колхозниксемпе йединоличниксем çĕнĕрен икĕ кĕпер турĕç тата çырмара икĕ пĕве пĕвелерĕç.

В. Çтепанăв.

ÇĔРПӲ. „Молот“ колхоз иртнĕ çулта йал варринче пулă ĕрчетмели пысăк кӳлĕ тума тытăнначчĕ. Кăçал çав кӳлĕне туса пĕтерсе пулăсем йачĕ. Хаљхи вăхăтра кӳлĕре пулăсем нумай ĕрчеççĕ. Кӳлĕ тарăнăшĕ 4 метр.

А. Ив в.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Лондăнри Йапонийе хирĕçле демонстраци. Демонстрантсем Лондăн урамĕсем тăрăх плакатсемпе пыраççĕ, „Йапони таварĕсене ан илĕр“, тесе чĕнеççĕ. (Сойузфото).

Шупашкарти мунчана йусаççĕ

Шупашкар хула совечĕн çĕнĕ мунчине йусама тытăнчĕç. Йусанă вăхăтра, ийулĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа 21-мĕшне çитиччен, мунча ĕçлемест.

Анчах та мунча директсийĕ мунчана вăхăтлăха хупни çинчен хула халăхне пĕлтермен пирки, мунча кĕме тесе пынă çынсем кайала саварна-çаварна кайаççĕ. Çак вăл халăха хисеплĕмени пулат.

СУТ

Ачана таптаса вĕлернĕшĕн

ЙЕТĔРНЕ. Чугуновски выљăхсене самăрлакан пунктăн шоферĕ Иван Петрович Лапшин Йетĕрнери пункта автомашинăпа пынă. 1938 çулхи ийулĕн 9-мĕшĕнче вăл Йетĕрнерен кайала кайнă чухне Стрелецки йалĕнче 10 çулхи ачана—Александр Токсубайĕва таптаса вĕлернĕ.

Йетĕрне районĕнчи халăх сучĕ ийулен 10-мĕшĕнче çак ĕçе пăхса тухса шофер-бандита П. П. Лапшина 7 çулăха тĕрмене хупмала, 2 çул хушши суйлав прависĕр хăвармала пригăвăр йышăнчĕ.

Н. Цветков, М. Йемелйанăв.

Г. М. Ивановă
комсомолкă — електрослесăр, Прокопйĕвски рудникре ĕçлет. Вăл Осоавиахимăн хула совечĕн стрелковăй спорт инструктăрĕ.

Рабочисен пахчисенче

Куславкка. Комбинатри рабочисем 200 çынна йахăн кăçал 75 гектар çине пахча-çимĕçсем акнă. Пахча-çимĕçсем лайăх ӳсеççĕ. Никифăрăв, Çтепанăвă тата ытти йулташсем хăйсен пахчисенчен 200-шер пăт çĕрулми, унсăр пуçне ытти пахча-çимĕçсем пухса илĕпĕр, теççĕ. Халĕ рабочисем пахча çимĕçсене пуçтарса кĕртме хатĕрленеççĕ.

А. М.

Пулни-иртнисем

Ийулĕн 10-мĕшĕнче Çĕрпӳри йалхуçалăх техникумĕн 1-мĕш номĕрлĕ общежитине вут хыпса илнĕ. Анчах Çĕрпӳри пушар командин çине тăрса ĕçленипе вут-хăвара часах сӳнтернĕ, хаљхи вăхăтра вут мĕнрен тухнине тĕрĕслеççĕ.

Пĕлтерни

Ийулĕн 19-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, хула Совечĕн çуртĕнче Шупашкар хулинчи МОПР йачейкисен представителĕсен канашлăвĕ пулат. Кун йĕрки: Испани халăхĕ фашисăма хирĕç кĕрешме пуçлани икĕ çул тултарни тата августăн 1-мĕш кунĕ.

Канашлăва йачейкă çекретарĕсен йе вĕсен вырăнне ĕçлекенсен пымала.

ПСК(б)П хула комитечĕ.
МОПР хула комитечĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Марксисăмăн пысăк та паллă произведенийĕсем

(ЙУЛАШКИ)

народниксен уйрăм çын мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен калакан, аслăлăха хирĕçле теорине критиклет кăна мар, вăл тата общĕсвăлă аталанура уйрăм çын чăннипе мĕнле вырăн йышăнса тăнине те кăтартса парат. Историйе çынсем тăваççĕ. Пур аслă историлĕ событисем те—çынсен нумай массисем тунă ĕç резуљтачĕсем, классен кĕрешĕвĕн резуљтачĕсем пулса тăраççĕ. Массăсен ĕçĕ, вăл ĕçĕн содержанийĕ, унăн резуљтачĕ паллă историлĕ условисенчен килет. XVII-мĕш тата XVIII мĕш ĕмĕрсенчи буржуалă револјуцисен саманинче массăсен кĕрешĕвне капиталисăма ирĕклĕн аталанса ӳсмешкĕн çул тасатса парасси патне кăна илсе пыма пултарнă. Пролетарилĕ револјуцисен саманинчи массăсен кĕрешĕвĕн хăйĕн татăклă тĕллевĕ пур—классене пĕтерсе, коммунисăм пĕтĕмĕшпех те туллийĕн çĕнтерес тĕллев пур.

Аслă çынсем историре мĕнле вырăн йышăнса тăраççĕ-ха? Плеханăв ку ыйту çине те ăнланмалла уçă, тĕрĕс тата ĕнентерӳлĕ ответ парат. „Аслă çын, унăн хăйĕн уйрăмлăхĕсем историлĕ аслă ĕçсене индивидуаллă сăн-сăпат панипе мар аслă, вăл ак çакăнпа аслă: унăн уйрăмлăхсем хăй вăхăтĕнчи пĕтĕмĕшлĕ тата уйрăмлăхлă сăлтавсенчен тухса тăракан аслă общĕствăлă нушасемшĕн пуриччен те ытларах, лайăхрах ĕçлеме пултарас уйрăмлăхсем пур. Карлейљ хăйĕн геройĕсем—çинчен çырнă паллă произведенийĕсенче аслă çынсене ĕçе пуçаракансем тесе йат парат. Ку пит те тĕллĕн каласа панă йат. Аслă çын шăпах ĕнтĕ пуçаракан çын пулса тăрат, мĕншĕн тесен вăл ыттисенчен инçенерех курат тата, унăн ĕçе тăвас кăмăлĕ ыттисенинчен вăйлăрах пулат. Вăл ун умĕнхи общĕствăн ăсхакăл аталанăвĕ кăларса тăратнă задачăсене татса парат; вăл общĕствăлă отношенисен аталанувĕ туса хунă общĕствăлă нушасене кăтартса парат; вăл çав нушасене кăнăçтарас тĕлĕшпе пуçарăва хăй çине илет. Вăл—герой. Ĕçсен йапаласен саккунлă йухăмне чарса лартма йе пăрса йама (имĕш) пултарнипе мар герой вăл, вăл ак çакăнпа герой: унăн ĕçĕ çав пулмаллах пулнă тата ăнланусăр йухăма ăнланса илсе тата ирĕклĕн кăтартса пани пулса тăрат. Вăл мĕнле вырăн йышăнса тăни—çакăнта, çакăнта ĕнтĕ—унăн пĕтĕм вăйĕ. Анчах ку вăл—калама çук пысăк вырăн йышăнса тăни пулат, вăл—хăрушă вăй“ („К вопросу о роли личности в истории“, стр. 38).

Аслă çынсем, çырнă Плеханăв, улшăнулă револјуцилĕ саманасенче çуралса тухаççĕ. Ку вăл тĕрĕс. Буржуалă общĕствă çуралса тухнă самана аслă çынсене, буржуалă револјуцисен аслă деятелĕсене çуратса кăларнă. Рабочи класăн капиталисăма сирпĕтсе антарас тĕллевлĕ йухăмĕ аслăран та аслă генисене—Маркса, Енгелса, Ленина тата Сталина кăларчĕ.

Плеханăв, тахçан рабочисем хушшинче авторитетлă пулнă политикăлă деятель, халь мĕнле майпа çукпа пĕрех пулса тăнин примерĕ вырăнĕнче тăма пултарат, халь ăна рабочи клас маннă, мĕншĕн тесен вăл массăсенчен уйрăлса кайнă, унăн интересĕсене сутнă. Рабочи клас çулпуçĕн вăйĕпе хăвачĕ вăл—çулпуç рабочи йухăмĕн ыйтăвĕсене мĕн тери лайăх палăртса пынинчен, вăл массăсемпе мĕнле çыхăнса тăнинчен килет.

* * *

„К вопросу о развитии монистического взгляда на историю“ йатлă кĕнеке çумне хушса çырнинче те, „О материалистическом понимании истории“ йатлă кĕнекинче те расă теорине—халь фашиссем йарса илнĕ теорине Плеханăв пĕтерсе лартмалах вăйлăн критиклет. Плеханăв ун чухнехи рассистсем çинчен çапла çырнă:“ Есĕр, пĕр халăхсем цивилизаци çулĕпе хăвăрт малала пынă вăхăтра, теприсем мĕншĕн-ха çав тери тĕлĕнмеле хуллен аталанса пыраççĕ?— тесе ыйтатăр. „Учонăй“ сире пĕр такăнмасăр: ку вăл расă уйрăмлăхĕсенчен килет, тесе ответ парат. Çавăн пек ответăн шухăшне ăнлантăр-и есĕр? Хăшпĕр халăхсем хуллен аталанса пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен рассин уйрăмлăхĕ çавăн пек ĕнтĕ—хуллен аталанасси; теприсем вара—пит хăвăрт цивилизациленсе пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен рассин тĕп уйрăмлăхĕ çавăн пек—вĕсем хăвăрт аталанса çитĕнме пултараççĕ. Есĕр цивилизациленнĕ тĕрлĕ халăхсене пĕрпĕринпе танлаштарса пăхсассăн, кунта та есĕр вĕсен истори пĕтĕм уйрăмлăхĕсене расă уйрăмлăхĕпе мĕн тери çăмăллăн ăнлантарса памалли пурринне куратăр. Ĕçлеме пĕлекен çынсен аллинче „расă“ общĕствăлă ăслăлăхăн пĕтĕм ыйтăвĕсене татса памали уçă пулса тăрат иккен. Çак асамлă тĕлĕнмеле вăйне кура, унпа çыхăнса тăракан ăнлану пит те ăнлашмала уçа тата паллă пуласса кĕтме йуранă пек туйăнат. Анчах вăл ĕçре пĕрре те апла мар иккенĕ палăрат“. (Плеханăв, т. VII, стр. 17).

Плеханăв çак сăмахсене кучуххи каннибалсене—фашиссене асра тытса çырнă пекех туйăнат: „Буржуалă писательсем, Дарвин çине кăтарта-кăтарта, чăнниппе класен хăйсен вулаканĕсене Дарвинăн ăслăлăхлă прийомĕсене мар, Дарвин каласа кăтартнă чĕрчунсен тискер-кайăкла инстинкчĕсене кăна сĕнсе панă. Маркс Дарвинпа пĕр йеверлĕ, буржуалă писательсем Дарвин сăнаса вĕреннĕ тискер-кайăксемпе, выљăхсемпе пĕр йеверлĕ“. („К вопросу о развитии монистического взгляда на историю“, стр. 146).

Епĕр пурăнакан кунсенче тискер-кайăкла, зоологиле йăласем саракансем вĕсем—фашиссем. Испанире, Китайра тата фашисла çĕршывсенче хăйсенче пулса пыракан йунла вĕлерӳсем, пĕр айăпсăр çынсене, хĕрарăмсене, пĕчĕк ачасене, ватăсене çĕршерĕн, пиншерĕн, мĕлйунĕпе вĕлерсе пĕтерни, çĕршер йалсемпе хуласене, куљтурăн ĕмĕртенхи памйатникĕсене çĕмĕрсе тăкни,—фашиссен тискер-кайăкла расă теорийĕсен практикăри ĕçĕ çавăн пек ĕнтĕ.

Плеханăв сочиненийĕсем пире çав ирсĕр, çынна хирĕç пыракан шухăшсене хирĕç тăма хĕçпăшаллантараççĕ.

* * *

Кам та кам çирĕп те тĕрĕс аслăлăхлă марксисла тавракурăмлă пулас текенсем Плеханăвăн диалектикăлă материалисăм çинчен çырнă чаплă произведенийĕсене вуламасăр хăварма пултараймаççĕ.

Анчах Плеханăв револјуцилĕ теорийе рабочи клас кĕрешӳвĕн практикипе çыхăнтарма пĕлмен. Вăл тахçан хăй пропагандăласа сарса пынă револјуцилĕ теорирен уйăрăлса кайнă, меньшевиксен йенне куçнă, вĕсен идеологĕ пулса тăнă.

Теорипе практикăн чăн чăн пĕрлĕхĕ пролетариатăн аслă полководецсен—Марксăн, Енгелсăн, Ленинăн тата Сталинăн генилĕ произведенийĕсенче тата нумай йенлĕ револјуцилĕ ĕçĕсенче пĕтĕçсе тăрат.

Шупашкарти Йăвăç каскалакан савăта çак специаљнăçсемпе ĔÇ ВĂЙĔ КИРЛĔ

Производствă пуçлăхĕ,
техник-нормировщик,
сĕтел-пукан пухнă çĕрте çменă маçтăрĕ,
сĕтел-пукан тунă çĕрте çменă маçтăрĕ,
сборăчнăй цехра аслă маçтăр,
сĕтел-пукан пухнă çĕрте бригадирсем,
браклакансем,
йакатакан цех пуçлăхĕ,
пăс-вăйĕ хуçалăхне пĕлекен çменă механикĕ,
машинлă цех пуçлăхĕ,
машинлă цех çменă маçтăрĕ,
шоферсем, економист, конюхсем, кочегар, каççир-счетовод.

Телефон тăрăх ыйтса пĕлмеле— № 1—76.

Шупашкарти Акушер шкулне бухгалтĕр тата каççир *кирлĕ.*

Телефон 1—84.

Дирекци.

Шупашкарти 60-мĕш № Тĕп перекет кассине квалификацилĕ контролорсем тата каççирсем кирлĕ

60-мĕш № Перекет касси.

Йалхуçалăх банкĕн Чăваш республикĕнчи Кантурне ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ çекретар, машинисткă КИРЛĔ

Условисем çинчен Йалхуçалăх банкĕн кантурĕнче 10 сехетрен пуçласа 14 сехетчен пĕлме пулат.

2—1

Çĕмĕрлери вăрманăç техникине вĕрентекен рабфак

производствăран уйăрăлмасăр каçхи курссене вĕренме кĕме

заявленисем йышăнат

1-мĕш курса çичĕ çуллă шкул программи чухлĕрен кайа мар пĕлӳллисене илеççĕ.

I, II тата III-мĕш курссенче вĕренекен студентсене стипенди параççĕ.

IV-мĕш курсри студентсене ваљли общежити пур, стипенди параççĕ.

Адрес: г. Шумерля, Чувашской АССР Лесотехнический рабфак.

Дирекци.

3—1

ГОСУДАРСТВĂН ХУСАНТИ МЕДИЦИНĂ ИНСТИТУЧĔ

1938—39 вĕренӳ çулĕнче вĕрентме илесси çинчен

ПĔЛТЕРЕТ

Институтра çак факуљтетсем пур: сиплеме вĕренмели, санитарипе гигиенă тата педиатри.

Заявленисене институт директăрĕ йачĕпе автобиографипе тата çак документсемпе пĕрле йамала:

а) вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат (подлинник),
б) паспорта пĕрле илсе пымала,
в) военнообязаннăйсем кӳ документсемсĕр пуçне тата çар службине тивĕçлĕхĕ пирки справкă тăратаççĕ,
г) виçĕ фотокарточкă, вĕсем çине ларусса государствă учрежденийĕнче çирĕплетермелле.

Заявленисене ийулĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕнчен йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕнĕ чухнехи испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшчен çак предметсем тăрăх пулаççĕ: вырăс чĕлхи, математика, физикă, химийă, политграмотă тата пĕр-пĕр йут çĕршыв чĕлхи (нимĕç, французь, акăлчан).

Студентсене ваљли общежити тата стипенди пулат.

Ийулĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа институтра пур предметсем тăрăх та консуљтаци пулат.

Адрес: Казань, Чернышевская, 16. Приемная комиссия Мединститута.

3—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 302 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 881.